чăваш халăх хаçачĕ

# ХЫПАР

СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче “Коммунизм ялавĕ” /халĕ “Хыпар”/ хаçата “ХИСЕП ПАЛЛИ” орденпа наградăланă

ШĂМАТ КУН
2014, авăн /сентябрь/
6

173-174 /26579-26580/ №№ Хакĕ ирĕклĕ WWW.hypar.ru

# Андриян Николаев чăваш халăхĕн асĕнчех



Сăн ӳкерчĕке "СЧ" хаçатран илнĕ.

## Чи телейлĕ кун

Çулçă сарнă сукмакпа
Утнă сарă кĕркунне.
Пепкине Анна аппа
çупăрланă хăй çумне.
Тин çеç çăмăлланнăскер
Хĕпĕртенĕ шутсăрах:
«Ку та – ывăл. Хураскер...
Пăхнă мар-и хамăрах?
Ашшĕ, кил-ха кунтарах,
ачуна савса лăпка.
Картишне тухса вара
янтăла халех сăпка.
Кĕмĕл уйăх тӳпере
ярăнса çӳренĕçем
Хупран тунă «кӳмере»
сиктĕр пĕчĕкçĕ этем.
Çăлтăр-тус та хаваспах
ятăр-и салам ăна.
Çĕнĕ ир çывхараспа
юхса антăр сăпкана...»
Мăшăрĕ «чĕрре» кĕрет,
акă мĕн вăл пĕлтерет:
«Авăнăн пиллĕкмĕшне
мантăн-им мĕнле кунне?
Çирĕм икĕ çул калла
килнĕ эс çут тĕнчене.
Халь сăпка ман çакмалла
менелник тăвас чухне?»
Йăл! кулать Анна аппа:
«Кĕркури, пит ан сĕрле».
Ӳлĕм тăвăпăр апла
Ик менелнике пĕрле.
Çӳл Хуçа тивлечĕпе
«Кайăк» килчĕ шăп çак кун.
Ун кун-çулĕ чип-чипер
пуласса шанать ман чун...
...Вулакан, ăнлантăн-и
Çак ача кам пулнине,
Тупсăмне уçса пани
Кунта вырăнсăррине?..

**Геннадий КУЗНЕЦОВ.**

***Шуршăлти А.Г.Николаев космонавт летчикăн мемориал комплексĕнче мухтавлă Андриянăмăрăн çуралнă кунне йышпа палăртнă кун яланах хĕвеллĕ, çутă, таса килнине пурте асăрханă-тăр. Урăхла пулма та пултараймасть пек, ентешĕмĕр питĕ уçă, ăш пиллĕ чунлăччĕ-кăмăллăччĕ. Иртнĕ вăхăтпа калаçатпăр пулин те вăл халĕ те чĕрĕ, пирĕн хушăрах пек. Виçĕм кун та çанталăк кăштах ăмăрччĕ, ĕнер вара хĕвел хăйĕн шевлисене шеллемерĕ.***

Совет Союзĕн виççĕмĕш космонавчĕн 85 çулхи юбилейне сумлă палăртма çав кун ăçтан кăна килсе çитмерĕç-ши çĕр-шывĕпех палăрнă чăваш ялне: Мускавран – тĕнче уçлăхĕн паттăрĕсем, Совет Союзĕн икĕ хут Геройĕсем Петр Климук генерал-полковник, Алексей Леонов генерал-майор, Совет Союзĕн Геройĕ Анатолий Соловьев, Раççей Геройĕсем Олег Новицкий, Юрий Батурин, "Восток” космос карапĕн никĕслевçи, космос карапĕсене вĕçеве хатĕрлекен ăслăлăхпа техника центрĕн тĕп специалисчĕ Виктор Благов, "Новости космонавтики" журнал редакторĕ Игорь Маринин, тĕп хуламăрти чăвашсен наци культурин автономийĕн вице-президенчĕ Анатолий Григорьев тата Андриян Григорьевичпа Валентина Владимировна хĕрĕ Елена Андрияновна Терешкова мăшăрĕпе, ывăлĕпе, тăванĕсемпе. Çĕр-шывăн тĕрлĕ кĕтесĕнчен делегацисен йышĕнче вун-вун хăна пулчĕ. Вĕсен йышĕнче хамăр республика ертӳлĕхĕ, тĕрлĕ шайри депутатсем, шкулта вĕренекенсем, çамрăк космонавтсен отрячĕсен хастарĕсем...

Юбилее хатĕрленсе комплекс дирекцийĕ пысăк калăпăшлă ĕç туса ирттернĕ. Уява çĕнĕлле ирттерчĕç тесен те йăнăш мар. Хальхинче хăнасене Андриян Николаев космосра пĕрремĕш хут пулнă хыççăн çĕкленĕ палăк умĕнче кĕтсе илчĕç. Ун хыçĕнчи сад территорийĕпе хывнă аллейăпа музей çурчĕ умĕнчи лапама тухиччен темиçе тĕлĕнтермĕш кĕтрĕ хăнасене. Чи пĕлтерĕшли – Совет Союзĕпе Раççей комсонавчĕсен сăн ӳкерчĕксен галерейи. Унта тĕнче уçлăхĕнче пулнă кашни паттăрăн сăн ӳкерчĕкĕсĕр пуçне – тулли биографийĕ, сумлă ячĕсем, наградисем тата ытти информаци: вĕçев мĕн вăхăт тăсăлнă, миçе хут уçлăха çĕкленнĕ, уçлăха миçе хут тухнă тата ытти те. Тавралла вырнаçтарнă мониторсенче Андриян Григорьевичăн икĕ вĕçевĕнчи, çемьери, ĕç-хĕлĕнчи сюжетсем пĕр-пĕрне ылмаштарса пычĕç, космоса тата космонавтсене халалланă юрăсем янăрарĕç. Тӳпере – çăмăл самолет. Летчик тĕрлĕ фигура туса халăха тĕлĕнтерчĕ.

8-9 стр.

*Ӗҫлӗ ҫул ҫӳрев*

# Етӗрнесен ашне туянасшӑнччӗ...

***Республика Пуҫлӑхӗ Михаил Игнатьев юн кун Етӗрне районӗнчи "Ленинская искра" колхоза 43 ҫул ертсе пынӑ Аркадий Айдака асӑнса лартнӑ палӑка уҫнӑ хыҫҫӑнах райцентрти "АвтоВАС" общество автостанцийӗн ӗҫ-хӗлӗпе паллашрӗ. Предприяти ертӳҫин ҫумне ҫитменлӗхсемшӗн асӑрхаттарчӗ. Пассажирсем валли лартнӑ вӑрӑм саксем тахҫанах кивелнӗ. "Вӗсене ҫӗннисемпе улӑштарӑр", – терӗ Пуҫлӑх. "Пилигрим" кафере Етӗрнере пӗҫерекен кукӑль-пӳремеч, райпо киоскӗнче Чӑваш Енре уҫлакан минерал шывӗ сутманнине курчӗ. Хаҫат-журнал сентри ҫинче чӑваш кӑларӑмӗсенчен "Сывлӑх" ҫеҫчӗ.***

"Сурское застолье" кафене кӗме тесе ура ярса пусрӗ кӑна – тутӑхса-хуралса кайнӑ ҫӳп-ҫап ешчӗкӗ куҫ умне тухса тӑчӗ. Ахӑртнех, хупах умне ӑна ҫур ӗмӗр каяллах лартнӑ, унтанпа пӗрре те сӑрламан. Реклама хучӗсене ҫыпӑҫтармалли хӑма йӑпӑх тӑкакан йытта аса илтерет. Ҫил кассӑн-кассӑн вӗрет те вӗсене сӗвет.

**"Етӗрне" суту-илӳ ҫуртӗнче районти хуҫалӑхсенче ҫитӗнтернӗ выльӑх ашне ырарӗ, анчах вӑл куҫ тӗлне пулмарӗ. "Эпӗ Етӗрнесен какайне туянасшӑн, – терӗ Пуҫлӑх саппун ҫакнӑ хӗрарӑма. – Анчах сентре ҫинче вӑл пӗр татӑк та ҫук". Р.Чернова сутуҫӑ каланӑ тӑрӑх – ӗҫ кунӗсенче хула ҫыннисене какай Ҫӗрпӳ районӗнчи "Ҫӗрпӳ беконӗ" предприятирен кӳнине кӑна туянма сӗнеҫҫӗ, Етӗрнесем ӑна канмалли кунсенче ҫеҫ сутаҫҫӗ. Ӗне, сурӑх ашӗ пач курӑнмарӗ.**

Хресчен урамӗнчи 8-мӗш ҫурта пурӑнакансемпе тӗл пулчӗ. Ӑна тӗпрен юсаҫҫӗ. Картишне асфальт сарнӑ. Строительсем пӗр тӗле айлӑм туса хӑварнӑран йӗпесапара шыв пухӑнать, ура айӗнче пылчӑк ҫӑралать. ЧР Пуҫлӑхӗ ӗҫри кӑлтӑк-калтӑка пӗтерме ыйтрӗ.

Районӑн тӗп больницин ӗҫхӗлне тишкерчӗ. Поликлиникӑна 25 ҫул каяллах хута янӑ. Ӑна тӗпрен юсама вӑхӑт ҫитнӗ. Ӗҫе пурнӑҫлама республика хысниччен укҫа ыйтаҫҫӗ. Стационар ҫуртне нумаях пулмасть уҫнӑ. Вӑл илемлӗн курӑнса ларать. Михаил Васильевич умӗнче чечек ҫитӗнтерменнине асӑрхарӗ. Поликлиникӑна инвалид урапипе кӗмелли хатӗр ӑнӑҫсӑррине палӑртрӗ.

Культура ҫуртӗнче канашлу ирттерчӗ. Унта ял тӑрӑхӗсен пуҫлӑхӗсем, предприяти-организаци, федераци, республика органӗсен районти уйрӑмӗсен ертӳҫисем хутшӑнчӗҫ. Райадминистраци пуҫлӑхӗ Владимир Кузьмин социаллӑ пурнӑҫпа экономикӑн кӑҫалхи 7 уйӑхри аталанӑвне тишкерсе доклад турӗ. Пӗтӗмӗшле илсен ӗҫ кӑтартӑвӗсем начар мар. Промышленноҫ производствин калӑпӑшӗ пӗлтӗрхи ҫав хушӑринчен 11,7% пысӑкрах. Ял хуҫалӑх ӗҫченӗсен ӗҫ укҫи 12% ӳснӗ. Анчах кунпа лӑпланмалла мар. ЧР аграрийӗсен вӑтам шалӑвӗ – 12 пин тенкӗ, Етӗрнесен 8887 тенкӗ ҫеҫ. Ял хуҫалӑх организацийӗсенче выльӑх ашне 7% сахалрах, сӗт 2% нумайрах туса илнӗ.

Сергей Павлов вице-премьер каланӑ тӑрӑх – мӗн пур харпӑрлӑхлӑ хуҫалӑхсенче какай хатӗрлессине 2009 ҫултанпа 40% яхӑн чакарнӑ. Мӑйракаллӑ шултра выльӑх – 4%, сӑвакан ӗне – 3,4%, сысна чылай хухнӑ, сурӑх 8,8% хушӑннӑ. Хальхи вӑхӑтра килти хуҫалӑхсенчен сӗтӗн кашни килограмне 13 тенкӗлле пуҫтараҫҫӗ. "Авӑн уйӑхӗнче ку хак тивӗҫтермест, – терӗ М.Игнатьев. – Вӑл 15 тенкӗрен йӳнӗрех ан пултӑр". Хака ҫак шая ҫитерме сӗнчӗ. Етӗрнесем хӑйсен вӑйӗпе туса илекен тупӑша район бюджечӗ пӗлтӗрхинчен 11% сахалрах пӑхнӑшӑн депутатсен Пухӑвне ӳпкелесе илчӗ. "Ултӑ тоннӑран йывӑртарах автомашинӑсене район шайӗнчи ҫулсемпе ҫӳреме чарӑр, – ыйтрӗ ЧР Пуҫлӑхӗ райадминистраци пуҫлӑхӗнчен. – Водительсене асӑрхаттарма ҫулсен хӗррине тивӗҫлӗ паллӑ вырнаҫтарӑр". Райадминистраци пуҫлӑхӗ вӗсене пӗр эрнере ларттарма шантарчӗ.

**Районта 7 уйӑхра 333 ҫын вилнӗ, 245 ача ҫуралнӑ. Ҫемьесем пӗлтӗрхи тапхӑртинчен ытларах саланнӑ. М.Игнатьев федераци, республика, муниципалитет органӗсем демографи кӑтартӑвне лайӑхлатас тӗлӗшпе начар ӗҫленӗшӗн критиклерӗ.**

Етӗрнери А.Филиппов предприниматель ыйтӑвне хуравласа Мускав-Хусан маршрутпа ҫӳретмешкӗн пӑхакан пуйӑс валли чукун ҫул тума 2020-2021 ҫулсенче ҫеҫ тытӑнасса пӗлтерчӗ. Пайтаҫӑ федерацин М-7 трассине Етӗрне таврашӗнчи ҫавра ҫулпа хӑҫан ҫыхӑнтарассипе те кӑсӑкланчӗ. "Сӑр юхан шывӗ урлӑ ҫӗнӗ кӗпер хывнӑ май районта автотранспорт ҫул ҫӳревӗн ҫивӗчлӗхӗ пӗтет, – хуравларӗ Михаил Васильевич. – Ҫавӑнпа ҫавра ҫул кирлех-ши? Социаллӑ объектсем укҫа нумай ыйтнӑ чух ҫав ҫула вӗҫлеме республика хысниччен 490 млн тенкӗ таран уйӑрма йышӑнасси пирки иккӗленетӗп".

"Янӑм шкулӗн ҫи виттинчен шыв анать. Ҫурт тӑррине хӑҫан улӑштарӗҫ?" – ыйтрӗ залра ларакан хӗрарӑм. "Ыйтӑва ҫак уйӑхра татса парӑпӑр", – хурав пачӗ райадминистраци пуҫлӑхӗ. Сывлӑх сыхлавӗн министрӗ А.Самойлова Полянккӑ ялӗнче кӑҫал ФАП тума пуҫлассине пӗлтерчӗ. Районта пурӑнакансен 70% медӗҫченсен ӗҫне, "лайӑх" тата "начар" тесе хак панӑ, 30% кӑна "5" паллӑпа пахаланӑ. Врачсен кашни уйӑхри вӑтам ӗҫ укҫи – 32 пин тенкӗ. "Ҫавӑн чухлӗ илнине кура ҫынсене лайӑхрах сиплессишӗн тӑрӑшасчӗ", – мӑкӑртатрӗ манпа юнашар ларакан.

Районта йӑлари хытӑ каяша уйӑрмалли пункт тума палӑртнӑ. Хальлӗхе ӑпӑр-тапӑра Чул хула облаҫӗнчи Воротынец районне турттараҫҫӗ. М.Игнатьев каяш пунктне районӑн инвестици программине кӗртме ыйтрӗ. Ҫакӑн хыҫҫӑн тин объекта республика хысниччен кӗмӗл уйӑрма йышӑнӗҫ.

Пӗтӗмлетсе ҫакна калас килет: Етӗрнесем хӑйсен аталану ҫулне тӗплӗн тишкерчӗҫ, ҫивӗч ыйту нумай ҫӗклерӗҫ. Пӗр пайне райадминистраци специалисчӗсем хуравларӗҫ. Канашлу усӑллӑ иртрӗ.



■ **Юрий МИХАЙЛОВ**

***Чӑваш Республикин Патшалӑх Канашӗн ХУШӐВӖ***

**Чӑваш Республикин пиллӗкмӗш суйлаври Патшалӑх Канашӗн черетлӗ ҫирӗм виҫҫӗмӗш сессине пухасси ҫинчен**

Чӑваш Республикин пиллӗкмӗш суйлаври Патшалӑх Канашӗн черетлӗ ҫирӗм виҫҫӗмӗш сессине 2014 ҫулхи авӑн уйӑхӗн 16-мӗшӗнче Шупашкар хулинче Правительство ҫуртӗн ларусем ирттермелли Пысӑк залӗнче пухас.

10 сехетре пуҫланать.

**Чӑваш Республикин Патшалӑх Канашӗн Председателӗ Ю.ПОПОВ.**

Чӑваш Республикин Патшалӑх Канашӗн черетлӗ ҫирӗм виҫҫӗмӗш сессийӗн кун йӗркинче – 25 ыйту, вӑл шутра:

1. Чӑваш Республикин "Чӑваш Республикин 2014 ҫулхи тата планпа пӑхнӑ 2015 тата 2016 ҫулсенчи бюджечӗ ҫинчен" саккунне улшӑнусем кӗртесси ҫинчен" саккун проекчӗ ҫинчен.
2. Чӑваш Республикин "Чӑваш Республикин обязательный медицина страхованийӗн территори фончӗн 2014 ҫулхи тата планпа пӑхнӑ 2015 тата 2016 ҫулсенчи бюджечӗ ҫинчен" саккунне улшӑнусем кӗртесси ҫинчен" саккун проекчӗ ҫинчен.
3. Чӑваш Республикин "Чӑваш Республикин ял хуҫалӑхӗн аталанӑвӗ ҫинчен" саккун проекчӗ ҫинчен.
4. Чӑваш Республикин "Чӑваш Республикин экономикине инвестицисем хывасси ҫинчен" саккун проекчӗ ҫинчен.
5. Чӑваш Республикин "Чӑваш Республикин вырӑнти хӑй тытӑмлӑха йӗркелесси ҫинчен" саккунне улшӑнусем кӗртесси ҫинчен" саккун проекчӗ ҫинчен.

*Тӗл пулу*

# Эконом-класс валли – хӑтлӑ ҫуртсем

***Чӑваш Ен Пуҫлӑхӗ Михаил Игнатьев авӑн уйӑхӗн 4-мӗшӗнче Мускавра федерацин ҫурт-йӗр строительствине аталанма пулӑшакан фонд гендиректорӗпе Александр Браверманпа тӗл пулнӑ. Федерацин "Раҫҫей Федерацийӗн Ҫӗр кодексне улшӑнусем кӗртесси тата Раҫҫей Федерацийӗн уйрӑм саккунӗсем ҫинчен" саккунӗпе килӗшӳллӗн Чӑваш Республикинче пурӑнмалли ҫуртйӗр тумалли проектсене пурнӑҫланине, ҫавӑн пекех чикӗлесе уйӑрман ҫӗр лаптӑкӗсемпе епле усӑ курнине сӳтсе явнӑ.***

Александр Браверманн Михаил Игнатьева ЧР Министрсен Кабинечӗпе асӑннӑ Фонд пӗр-пӗринпе килӗштерсе ӗҫлеме йышӑннине ӑнӑҫлӑ пурнӑҫланӑшӑн тав тунӑ. Шупашкарта 6,3 гектар ҫинче пурӑнмалли 4 ҫурт /кунта 2 ача сачӗ вырнаҫнӑ/ хута кайнӑ. Пурӑнмалли вырӑн 100 пин тӑваткал метр йышӑнать.

2011 ҫулта Ҫӗрпӳре 5 гектар ҫинче 1226,7 тӑваткал метр 11 коттедж тунӑ. Халӗ хулари 20 гектар лаптӑкра строительство пырать. 2018 ҫулччен пурӑнмалли 20 пин тӑваткал метр вырӑн йышӑнакан нумай хутлӑ 10 тата харпӑр хӑй валли 16 ҫурт туса пӗтермелле /ҫав шутра 50% – эконом-класли/. 2013 ҫулта – 30 хваттерлӗ ҫурт, кӑҫалхи ҫу уйӑхӗнче – пурӑнмалли ҫуртӑн 30 хваттерлӗ блок-секцине, ҫӗртмере 16 коттедж хута янӑ. 2014 ҫулхи раштав тӗлне 60 хваттерлӗ тата 2 ҫурт хатӗр пулмалла.

2013 ҫулхи чӳк уйӑхӗнче Раҫҫей Федерацийӗ Ҫӗрпӳ районӗнчи хӑйӗн пурлӑхӗ шутланакан 44 гектара яхӑн ҫӗре Чӑваш Республикине усӑ курма ирӗк панӑ. Ку лаптӑкра эконом-класс валли пурӑнмалли ҫуртсем тумашкӑн проект хатӗрлес ӗҫ вӗҫленсе пырать. Федераци харпӑрлӑхӗнчи 60 гектара та пулас ҫуртсем валли куҫарма планлаҫҫӗ.

Ҫӳлерех асӑннӑ саккунпа килӗшӳллӗн халӗ ҫӗр лаптӑкӗсене ҫурт-йӗр строительствин ҫаврӑнӑшне васкаварлӑрах кӗртмешкӗн майсем пур.

Михаил Игнатьев Александр Бравермана фонд йышӑнӑвӗпе килӗшӳллӗн пурӑнмалли ҫуртсем, ҫавӑн пекех стройиндустри валли производство объекчӗсем тумашкӑн 304,49 гектар ҫинчи 85 лаптӑка та ҫаврӑнӑша кӗртмелли майсене пӑхса тухма сӗннӗ.

18-шӗ /55,4 га/ пирки тивӗҫлӗ документсем хатӗрленӗ. Виҫҫӗшӗпе /Шупашкарта – 0,4668, Канашра – 9,4552, Улатӑрта – 0,28 гектар/ "пилотлӑ лаптӑк" вырӑнне хурса усӑ курасшӑн.

Калаҫура проектсене пурнӑҫламалли тапхӑрсене палӑртнӑ. Михаил Игнатьевпа Александр Браверманн Чӑваш Республикипе федерацин ҫурт-йӗр строительствине аталанма пулӑшакан фонд пӗр-пӗринпе малашне те килӗштерсе ӗҫлеме кирлине палӑртнӑ.

■ **В.ВАЛЕНТИНОВ**

Ĕçлĕ тĕл пулусем

# Тинех çут çанталăк газĕллĕ пулчĕç

***Ял халăхĕ 10-15 çул каялла çут çанталăк газĕ пирки ырă хыпар илтсенех, эх, хĕпĕртетчĕ, çавăнтах ĕненмесĕр: "Чăнах-ши ку, телей курмалли пирĕн пата та çитрех-ши вара?" – тетчĕ.***

***Халĕ вара кунашкал калаçу тахçан пулса иртнĕн туйăннăран, ыйту таталнăран "кăвак çулăм" çинчен вуçех сăмахлама пăрахрăмăр. Апла пулин те хаçат вуланĕ çак материалпа паллашсан тĕлĕнетех пулĕ: "Нивушлĕ ялсене халĕ те газ кĕртсе пĕтермен?"***



Тĕрлĕ сăлтава пула республикăри хăш-пĕр яла паянхи кун та çут çанталăк газĕ çитмен. Сăмахран, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи темиçе яла.

Виçĕм кун республика премьер-министрĕ Иван Моторин ку тăрăхри Нишер ялне çитрĕ. Нишерпе Щамал ялĕсен çыннисене: "Ялсене çут çанталăк газĕ кĕртес программăн виççĕмĕш тапхăрĕпе килĕшӳллĕн малашне сирĕн килĕрте те "кăвак çулăм" çунма тытăнĕ. Темиçе çул каялла вара кун пирки ĕмĕтленме çеç пултарнă", – терĕ. Пухăннисене çывхарса килекен уяв ячĕпе – Нефть, газ тата топливо промышленноçĕн ĕçченĕсен кунĕпе – саламларĕ.

Савăнăçлă уява район администрацийĕн пуçлăхĕ Владимир Григорьев уçрĕ, çуртсенче хăтлăхпа ăшă пултăр терĕ. Ĕçе пурнăçлама 13 млн тенкĕпе усă курнине, 11600 метр ытла тăршшĕ пăрăх хурса тухнине пĕлтерчĕ.

– Газ кил-çурта ăшăтать, хăтлăх кӳрет çеç мар, хăрушлăх та кăларса тăратать. Çавăнпа та унпа хăрушсăрлăх техникине тĕрĕс пăхăнса тата тирпейлĕ усă курăр, вăхăтра тӳлĕр, – терĕ "Газпром газ валеçесси Шупашкар" АУО гендиректорĕ Кияметдин Мифтахутдинов.

Сумлă хăнасене Аксарин культура çурчĕн "Туслăх" ушкăнĕ илемлĕ юрă-кĕвĕпе тыткăнларĕ.

Чылайранпа кĕтнĕ самант çитрĕ. Урамри çӳллĕ çĕре вырнаçтарнă çункăч факелран тивсе илчĕ. Ăмăр çанталăкра кăвак çулăм лайăх курăнмаллах çунма тытăнчĕ.

Унтан хăнасем чи хĕрринчи киле кĕчĕç. Кунта тивĕçлĕ канăва тухнă Николай Леонидовичпа Елена Александровна Николаевсем пурăнаççĕ. Нумаях пулмасть вĕсем газ плити вырнаçтарнă. Акă кĕçех вăл та илемлĕн çунма тытăнчĕ.

Иван Борисович малалла Аксарин ял тăрăхĕнчи Алексей Федоров хресчен-фермер хуçалăхне çул тытрĕ. Алексей Витальевич 2500 тонна çĕр улми вырнаçакан управ тума тытăннă. Хальлĕхе тĕпне сарнă, кăшкарне тытăнтарнă. Сивĕсем çитиччен тăрине витмелле, ăшă тытакан материалпа сăрмалла. Çак тĕллевпе мĕн пурĕ 25 млн тенкĕ тăкакланĕ.

– Çĕр улмине уйран килограмне 5-6 тенкĕпех сутни пăшăрхантаратчĕ. Мĕн тăвас-ха хĕл каçармалли вырăн çук пулсан? Хĕлле, çуркунне 2-3 хут пысăкрах хакпа вырнаçать. Управ кирлех ĕнтĕ, – тет фермер.

Хуçалăх 1000 гектар – пĕрчĕллĕ тата пăрса йышши культурăсем, 200 гектар çĕр улми çитĕнтерет. "Иккĕмĕш çăкăр" лаптăкне 22 млн тенкĕлĕх туяннă техникăпа çу каçипех шăварнă. Гектартан çĕр улми 250 центнертан кая мар тухмалла.

Иван Моторин Урхас Кушкăри Наталья Кутузова хресчен-фермер хуçалăхĕпе те паллашрĕ. Кунта унччен выльăх-чĕрлĕх отраслне вăйлă аталантарнă "Звезда" совхоз пулнă, анчах юхăннă. Наталья Валерьевна фермăна юсаса çĕнетсе мăйракаллă шултра выльăх самăртас тĕллевлĕ.

■ **Валентин ГРИГОРЬЕВ.**

Надежда ВАХТЕРКИНА сăн ӳкерчĕкĕ

# Кашлать "Йăмра" Çĕпĕр çĕрĕнче...



Йăмра – чăваш ялĕн илемĕ. Ăна тĕнчипе паллă художник Алексей Кокель хăйĕн картинисенче ĕмĕрлĕх сăнарласа хăварнă. Чăваш халăхĕн мухтавлă ывăлне Андриян Николаева та Шуршăлти йăмрасем хăват парса тăнах. Йăмра тăван килтен инçете тухса кайса тĕпленекен кашни чăваш чĕринче упранать. Çавăнпах Тюмень облаçĕнчи Анат Тавдари йăхташăмăрсемĕн фольклор ансамблĕ валли ят тупасси йывăр пулман. Пуçа килнĕ пĕрремĕш сăмах – "Йăмра" – яланлăх çирĕпленсе юлнă. Йăмра шавĕ аякри Çĕпĕр çĕрĕнче чăваш халăх юррисен ахрăмĕ пулса 18 çул янăрать.

"Йăмра" коллективне Тюмень облаçĕн тулашĕнче те аван пĕлеççĕ. Вăл – район, облаç, Раççей, тĕнче шайĕнчи фестивальсен лауреачĕ. Ансамблĕн пултарулăхĕ пысăккине "халăх" ятне илни те çирĕплетет. Çитес çул артистсем Чăваш Ене те килсе курасшăн. Ансамбль чăваш халăх юррисене шăрантарать. Сцена çине чăваш тумĕпе тухать. Вĕсене Анат Тавда район администрацийĕн пуçлăхĕ Владимир Семенов чăваш нумай пулăшать.

Тăван халăх юррисене юрлакан коллективра пĕр чăваш кăна. Вăл – Комсомольски районĕнчи Асанкассинче çуралса ӳснĕ Любмила Буйносова. Ыттисем пурте тĕрлĕ халăх çыннисем.

■ **Владимир ВАСИЛЬЕВ, культурологи докторĕ**




# Çĕнĕ проект

Михаил Игнатьев авăн уйăхĕн 3-мĕшĕнче РФ Патшалăх Думин пурăнмалли çурт-йĕр политикипе коммуналлă хуçалăх комитечĕн председателĕн пĕрремĕш çумĕпе Елена Николаевăпа тĕл пулнă. Вăл ЧР Пуçлăхне комитетра тара памалли-илмелли пурăнмалли çурт-йĕрĕн коммерциллĕ мар фондне йĕркелес ыйтăва анлăн сӳтсе явнине пĕлтернĕ. "Çакă хваттер е уйрăм çурт туянма пултарайман, пурăнмалли вырăна лайăхлатма тĕллев тытнă çемьесене сĕнекен çĕнĕ меслет", – тенĕ Е.Николаева. Чăваш Ен унпа малтисен йышĕнче усă курма пултарать. Çурт-йĕр тăкакĕн 10% инвестор саплаштарĕ.

Ку меле 2012 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕнчен пуçласа кивĕ тата ишĕлес патне çитнĕ çуртсенчен çынсене çĕнĕ хваттерсене куçарнă чух ĕçе кĕртĕç. Çитес сессире çак шухăша саккуна хывăпăр", – хыпарланă депутат. М.Игнатьев сĕнĕве ырласа йышăннă. "Пилот проекта республикăра пурнăçа кĕртме хатĕр", – тенĕ.

Е.Николаева тарифсене нумай çуллăха хатĕрлесе çирĕплетни коммуналлă инфратытăма çĕнетме, çакнашкал объектсем çĕнĕрен тума май парассине палăртнă. М.Игнатьев республикăри ертсе пыракан компанисен ĕçне патшалăх енчен витĕм кӳрсе саккунсемпе килĕшӳллĕн лайăххах йĕркеленине пĕлтернĕ, Чăваш Енпе ĕçлĕ çыхăну тытнăшăн тав тунă.

**С.СЕРЕГИН.**

# Çитĕнтернине хирте хăвармалла мар



Кăçал республикăра пĕрчĕллĕ тата пăрса йышши культурăсене 252562 гектар çинчен пухса илмелле. Авăн уйăхĕн 4-мĕшĕ тĕлне тырă тĕшĕлессипе плана 81,6% тултарнă, пĕлтĕр – 98,2%. 2013 çулхи çак вăхăтринчен 16,6% юлатпăр. Вырма вăраха тăсăлчĕ. Юлашки 9 кунра кăтарту 7,3% çеç ӳсĕмленнĕ. Сăлтавĕ тĕрлĕрен: хире пĕр вăхăт комбайн çителĕксĕр тухрĕ, халĕ час-часах çăвакан çумăр чăрмантарать. Вĕсем çеç-ши? Ĕççи хăвăртлăхне чакармасăр пĕр тикĕс тытса пырассине хамăрта та шырамалла пулĕ.

Хĕрсех çĕр улми кăларас чухне вырмана Елчĕксем çеç вĕçленĕ. Вĕсен хыççăн – Патăрьел /90%/, Сĕнтĕрвăрри /89%/, Комсомольски /88,5%/, Куславкка /83,9%/, Шăмăршă /82,6%/, Пăрачкав /82,1%/ районĕсем.

Елчĕксем 41514 тонна тырă пухса кĕртнĕ. Патăрьелсен /39664/, Çĕрпӳсен /37494/, Вăрнарсен /35052/, Комсомольскисен /30140/ кăтартăвĕ аван. Чи сахалли – Çĕмĕрлесемпе /3587/ Хĕрлĕ Чутайсен /6563/.

Йĕпе-сапа çĕр улми кăларма та кансĕрлет. Авăн уйăхĕн 4-мĕшĕ тĕлне 885 гектар çеç кăларнă, пĕлтĕр – 1923. Пахча çимĕç пухса илессипе те юларах пыратпăр: 1954 тонна /2449/.

Етĕрнесем – 32 га, Вăрмарсем – 13,5, Çĕрпӳсем 9,5 га хăмла татнă.

Кĕрхи культурăсене акасси малалла пырать. Хальлĕхе плана 43,3% /53,9%/ пурнăçланă. Пĕлтĕрхи çак вăхăтринчен 10,6% каярах юлатпăр. Çавăнпа уяр кунăн кашни сехечĕпе туллин усă курма тăрăшмалла. Хальлĕхе кĕр акинче Муркашсем /69,7%/, Сĕнтĕрвăррисем /57,9%/, Пăрачкавсем /57,2%/, Красноармейскисем /55,4%/, Елчĕксем /55,2%/ малта.

■ **В.ВАСИЛЬЕВ**

# Аграрисен шалăвĕ ӳснĕ

Республикăн ял, вăрман тата сунар хуçалăхĕнче вăй хуракансен кашни уйăхри вăтам ĕç укçи кăçалхи кăрлач-утă уйăхĕсенче 12174,1-шер тенкĕ /пĕлтĕрхи çав тапхăртинчен 13,8% пысăкрах/ пулнă. Ку – ЧР экономикине тӳпе хывакансен вăтам шалăвĕн 60%. Çав вăхăтрах пĕтĕм экономикăра тăрăшакансен ĕç укçи 9,5% ӳснĕ.

Кăçалхи 7 уйăхра апат-çимĕç, вăл шутра ĕçмелли шывсем, туса кăларакан производствăра ĕçлекенсем уйăхсерен 18540,6-шар тенкĕ /2013 çулхи асăннă хушăринчен 9,3% нумайрах/ илнĕ.



# ВЫРĂНТИ ХĂЙ ТЫТĂМЛĂХ

Ятарлă кăларăм

Ыйтăм

## Влаç халăх ырлăхĕшĕн тăрăштăр

***«Вырăнти хăй тытăмлăхăн» иртнĕ кăларăмĕнче /«Хыпар», 2014, çурла, 16/ федерацин тата республикăн патшалăх влаçĕн ĕç тăвакан органĕсене йĕркелемелли пĕтĕмĕшле принципсене çĕнетсе урăхлатма йышăнни, саккунсене улшăнусемпе хушăмсем кĕртесси пирки Чăваш Республикин юстици министрĕ Надежда Прокопьева каласа панăччĕ. Хальхинче эпир ун пирки тĕрлĕ вăхăтра влаç тытăмĕнче ĕçленĕ е паян унта яваплă вырăн йышăнакан çынсене хăйсен шухăш-кăмăлне пĕлтерме ыйтрăмăр.***

**Генрих ВАСИЛЬЕВ, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ, «Пĕтĕм Раççейри вырăнти хăй тытăмлăх Канашĕ» общество организацийĕн Чăваш регион уйрăмĕн председателĕ:**

– Раççей Президенчĕ Владимир Путин пĕлтĕр Федераци Пухăвне янă Çырăвĕнче вырăнти хăй тытăмлăха йĕркелемелли пĕтĕмĕшле принципсене тĕплĕ тишкерме, ăна халăха çывăхрах тума сĕнчĕччĕ. Ун хыççăн федерацин хула округĕсен, муниципалитет районĕсен тата ял тăрăхĕсен шайĕнчи влаç тытăмне йĕркелемелли саккуне темиçе улшăнупа хушăм кĕртрĕç. Пирĕн республикăра та федерацин 2014 çулхи çу уйăхĕн 27-мĕшĕнчи «Раççей Федерацийĕн субъекчĕсен саккун кăларакан /представитель/ тата патшалăх влаçĕн ĕç тăвакан органĕсене йĕркелемелли пĕтĕмĕшле принципсем çинчен» саккунĕн 26.3 статйине улшăнусем кĕртесси çинчен» 136-мĕш ФЗ №-лĕ саккунне тата «Раççей Федерацийĕнче вырăнти хăй тытăмлăха йĕркелемелли пĕтĕмĕшле принципсем çинчен» саккунне сӳтсе явасси пырать.

Ку енĕпе кашни çыннăн хăйĕн шухăшĕ, анчах чылай чухне вĕсем пĕтĕмлетӳллĕ пĕр ăнлав патне çитсе тухаççĕ: вырăнти влаç тытăмне çĕнетмелле. Çавăнпа чылайăшĕ района пĕр пуçлăх, хальхи пек – иккĕн мар, ертсе пымалли, ăна халăха сасăлавĕпе çирĕплетмелли пирки калать. Районăн саккун кăларакан органне те халăх тӳрремĕн суйланипе йĕркелемелле. Ял тăрăхĕн пуçлăхĕпе тата депутачĕсемпе лару-тăру кăшт урăхларах. Ку ыйтура пĕр пĕтĕмĕшле хурав тупасса шанатăп. Çавăнпа саккуна çĕнĕлĕхсем кĕртессине халăхпа сӳтсе явма йышăннă та. Проекта хатĕрленĕ чухне, паллах, тĕплĕ тишкернĕ хыççăн, халăх шухăшне тĕпе хураççĕх.

**Михаил ПРОХОРОВ, Красноармейски районĕн Хисеплĕ гражданинĕ, вăрçă тата педагогика ветеранĕ, район ĕçтăвкомĕнче ĕçленĕ.**

– Çитес çулхи кăрлачăн пĕрремĕшĕнчен ял тăрăхĕн администрацийĕ татса памалли вырăнти пĕлтерĕшлĕ ыйтусен шучĕ палăрмаллах чакать: 39-тан 17-шне муниципалитет органне параççĕ. Апла тăк ял тăрăхĕн пуçлăхĕн ĕçĕ самаях çăмăлланать. Унсăрăн укçатенкĕпе çыхăннă функцисене пурнăçланă чухне, вырăнти бюджет чухăнран, тертленме тиветчĕ. Çавахĕ те тивнĕ. Ара, ку е вăл хушăва-сĕнĕве пурнăçламасан пуçран шăлмаççĕ вĕт. Шухăшласассăн пуçлăхăн айăпĕ те çук пек, анчах пурнăçламан, апла тăк – айăплă. Илтнĕ тăрăх – республикăри чылай ял тăрăхĕн пуçлăхĕ çак сăлтавпа ĕçрен хăй ирĕкĕпе кайнă. Саккуна улшăнусем кĕртнĕ хыççăн, манăн шухăшăмпа, кун пек пулмĕ.

Ял тăрăхĕн пуçлăхĕн тилхепине суйлавра мандат илнĕ депутатсенчен пĕрне памалла текен шухăшпа килĕшетĕп. Халăх шаннă çын халăхшăн ĕçлетех.

**Владимир АЛЕКСАНДРОВ, 1995-2003 çулсенче – Вăрмар район администрацийĕн пуçлăхĕ:**

– Федерацин 136-ФЗ №-лĕ саккунне тата республикăри Юстици министерстви хатĕрленĕ «Чăваш Республикин «Чăваш Республикин вырăнти хăй тытăмлăха йĕркелесси çинчен» саккунне улшăнусем кĕртесси çинчен» саккун проектне халăхпа сӳтсе явма йышăнни хăех халăх шухăш-кăмăлне, сĕнĕвĕсене тĕпе хурассине пĕлтерет. Проектпа килĕшӳллĕн район администрацийĕн пуçлăхне малашне халăх суйлĕ. Эпĕ хăй вăхăтĕнче çак должноçра ĕçленĕ чухне шăпах çапла пулнă та. Ĕç опытĕнчен пăхсан – района пĕр пуçлăх, паллах, пĕр шухăшлă, хастар та пултаруллă çынсенчен тăракан коллективпа, ертсе пымалла. Район депутачĕсен Пухăвĕн ертӳçин – хăйĕн тивĕçĕ, функцийĕсемпе полномочийĕсем. Иккĕшĕ те – яваплă вырăн. Çав яваплă вырăнти ертӳçĕсен хăйсен вăй-хăватне, пĕлĕвне халăхшăн ĕçлеттермелле. Пĕр ĕмĕт-тĕллевпе.

Халĕ Вăрмар поселокĕнче икĕ пуçлăх тесен те йăнăш мар: пĕри – район администрацийĕн , тепри – Вăрмар хула тăрăхĕн пуçлăхĕ. Иккĕмĕшне халăх суйланă. Пĕр тăрăхра икĕ пуçлăх пулни нумай ĕçĕн пахалăхне чакарать. Çапла ан пултăр тесен çак тивĕçе çĕнĕрен суйланнă район депутачĕсен Пухăвĕн председателĕн полномочине кĕртмелле. Кун пек район центрĕшĕн район ертӳçи яваплă. Укçа-тенкĕн тăкакĕ те пĕчĕкленет.

Проектра ял тăрăхĕн пуçлăхне мĕнле суйламаллине те уçăмлă палăртнă. Çапах çапла хушса каланă пулăттăм: ăна чăннипех ял тăрăхĕн пухăвне суйланнă депутачĕсенчен çирĕплетмелле. Район депутачĕсен Пухăвне ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсенчен йĕркелемелле. Сахал ял тăрăхĕсемлĕ территорисенче вара, кворум валли, ытти сферăри маттур çынсене мандатпа тивĕçтермелле. Пĕтĕмлетерех каласан, ял тăрăхĕн пуçлăхĕ район депутачĕн мандачĕллĕ пулсан ăна вырăнти пĕлтерĕшлĕ ыйтусене татса пама çăмăл пулать. Тата ĕç тăвакан тытăмăн та, представитель органăн те пĕр-пĕрине килĕштерсе халăх ырлăхĕшĕн тăрăшмалла.

**Вениамин АРХИПОВ, ĕç ветеранĕ /Элĕк районĕ, Мартынкасси ялĕ/:**

– Мана вырăнти влаç тытăмĕнче икĕ хут ĕçлме тӳр килчĕ. Малтанах – иртнĕ ĕмĕрĕн 60-70-мĕш çулĕсенче, иккĕмĕш хут – 80-мĕш çулсен вĕçĕнче. Çавăнпа та вырăнти влаç ял çыннишĕн чи пĕлтерĕшлĕ орган пулнине лайăх пĕлетĕп.

Федерацин вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене йĕркелемелли саккуна улшăнусем кĕртесси çинчен пĕлсенех манăн та сĕнӳсем çуралчĕç. Вырăнти влаçа халăхпа суйласа йĕркелеме палăртни хăех пурнăç таппине туйса тăнипе çывăх. Муниципалитет районĕн ертӳлĕхĕн лавне пĕр çыннăн кăна туртмалла. Ун чухне пуçлăхăн яваплăхĕ татах ӳссе пырĕ, халăх та ку е вăл çивĕч ыйтушăн камран ыйтмаллине пĕлĕ.

2015 çулхи кăрлачăн пĕрремĕшĕнчен ял тăрăхĕн полномочийĕсен шутне чакарнипе, 2/3 пайне район шайне панипе килĕшместĕп. Кун пек тусан вырăнти влаçăн сумĕне пĕлтерĕшне пĕчĕклетнĕн туйăнать. Ял тăрăхĕн тивĕçĕ 30-40 çул каяллахи пек тĕрлĕ хут-документ хатĕрлекен, справка çырса паракан орган пек юлмĕ-ши? Мĕншĕн çапла калатăп: ара, вак-тĕвек ыйтупах район администрацине кайса, унти вăрăм черетре ларса вăхăта çухатассăн туйăнать. Уйрăмах ман пек ватăсемшĕн чăрмавлă пулмĕши ку?

Çавăхран, пирĕн районта 114 ял. Вĕсенчи урамсенчи çул-йĕре юсаса, халăха асфальтлă çулпа, ĕçмелли шывпа тивĕçтерме, ваннă башньăна е насуса тӳрлетме, социаллă çуртсене хăтлăлатма е ытти ыйтупа район администрацине «пуç çапма» çӳреме тивет ахăртнех. Кун пек район территорийĕнчи аякри ялсен шăпи малтанхи пекех хурлăхлă пулассăн туйăнать.

■ **Ю.ПЕТРОВ**
**ыйтса пĕлнĕ**

Хисеп

## Пысăк тӳпе хывнăшăн

***Шупашкар хула депутачĕсен Пухăвĕ хăйĕн пуш уйăхĕнчи ларăвĕнче «Шупашкар хулишĕн хастар ĕçсем тунăшăн /«За заслуги перед городом Чебоксары»/ медалĕн положенине пĕр саслăн çирĕплетнĕ. Йышăну ака уйăхĕнче вăя кĕнĕ. Унпа тĕп хуламăрăн экономика аталанăвне тата социаллă пурнăçне пысăк тӳпе хывнăшăн, муниципалитет программисене пурнăçлама хастар хутшăннăшăн, катастрофа инкекĕсене сирнĕ, пушар чухне кătартнă паттăрлăхшăн, ыр кăмăллăх акцийĕсене иртерме укçа-тенкĕпе пулăшнăшăн уйрăм çынна е коллектива чыслĕç.***



Çĕнĕ наградăна çавăн пекех предпринимательлĕх пĕрлĕхĕнчи усламçăсем, ачасене пĕлӳ тата воспитани паракансем, сывлăх сиплевĕн ĕçченĕсем, общество хастарĕсем тата массăллă информаци хатĕрĕсенче тăрăшакансем тивĕçме пултараççĕ. Шупашкар хула депутачĕсен Пухăвĕн яланхи комисси председателĕ Николай Владимиров шухăшĕпе пичет тата электрон кăларăмĕсен журналисчĕсем ăна хула аталанăвне тĕплĕ çутатнăшăн тата хула сумне ӳстернĕшĕн тивĕçме пултарĕç.

Наградăна кама парассине хула депутачĕсен Пухăвĕн президиумĕ йышăнать. Кандидатурăсене ĕç коллективĕсемпе общество организацийĕсен, вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен сĕнме ирĕк пур.

– Кун пек награда кирлине пурнăç хăй кăтартрĕ, – тет Николай Николаевич. – Вăл хула çыннисене хăй пурăнакан вырăна тата илемлĕрех, хулана тата хăватлăрах тума хавхалантарĕ. Халĕччен хастар ĕçшĕн хавхалантарма пирĕн виçĕ чыслав – «Шупашкар хулин Хисеплĕ гражданинĕ», хула депутачĕсен Пухăвĕн Хисеп хучĕпе Тав çырăвĕ – пулнă. Медаль хăйĕн статусĕпе «Шупашкар хулин Хисеплĕ гражданинĕ» хисеплĕ ят хыççăн иккĕмĕш пулĕ. Сăмах май, награда комиссийĕ çулталăкра пĕрре мар, наградăлама ыйтса çырнă хутсем килнĕ хыççăн пухăнса ыйтăва татса парĕ.

Медаль хатĕрлеме ирттернĕ конкурса 9 ăстаран 21 ĕç килнĕ. Çивĕч тупăшура Раççей Художниксен союзĕн членĕ Владислав Николаев ювелир-художникăн, медальерăн, геральдистăн эскизĕ çĕнтернĕ. Сăмах май, вăл ăсталанă «Чăваш Республикинчи вырăнти хăй тытăмлăх органĕсенче тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн» Мухтав паллипе тивĕçнисене чыслаççĕ те ĕнтĕ.

■ **Юрий СТЕПАНОВ**

## Яваплă вырăн пушă тăмĕ

Суйлав саккунĕпе килĕшӳллĕн хушма тата вăхăт çитичченхи сасăлавăн пĕрлĕхлĕ суйлав авăн уйăхĕн иккĕмĕш вырсарни кунĕнче иртмелле. Кăçал вăл çав уйăхăн 14-мĕшĕнче пулать.

Территори суйлав комиссийĕсенчен пĕлтернĕ тăрăх – асăннă кун Красноармейски районĕнчи Кĕçĕн Шетмĕ, Шупашкар районĕнчи Çырмапуç тата Тăвай районĕнчи Чутей ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене суйлĕç. Кандидатсене регистрациленĕ, бюллетень çителĕклĕ, сасăлав пӳлĕмĕсене хатĕрленĕ.

Çичĕ суйлав участокĕнчи сасăлава 3350 суйлавçă хутшăнать.

**А.СТЕПНОВ.**

● ➡ 6,11,12 стр.

ВЫРĂНТИ ХĂЙ ТЫТАМЛĂХ

# Çĕнĕлĕхсене савăнса йышăнмалла

***Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи витĕр тухнă И.Ермолаев ветеран, кăçалхи çурла уйăхĕнче 95 çул тултарнăскер, пурнăçра хурашурне пайтах курнă пулин те кашни çутă куна тулли кăмăлпа кĕтсе илет. Вăл Йĕпреç районĕнчи Пысăк Упакасси ялĕнче çуралса ÿснĕ, халĕ Етĕрне хулинче пурăнать. Етĕрнере сĕт-çу завод пуçлăхĕнче ĕçленĕ, çăкăр пĕçерекенсен коллективне ертсе пынă.***



Фронтра – разведчик. Украина иккĕмĕш тата Воронеж фрончĕсенче тăшманпа çапăçнă. Чылай хулапа яла ирĕке кăларма хутшăннă, Германие çитнĕ. Хаяр вăрçă çулĕсене паян та пăлханса аса илет ветеран */сăн ÿкерчĕкре/.* Сăмах май, çак кунсенче Чăваш патшалăх телерадиокомпани ĕçченĕсем – Алена Алексеева тележурналистпа Сергей Мышев оператор "Аса ил-ха, салтак!" кăларăм валли тĕрленчĕк хатĕрлерĕç.

Иван Васильевича ниепле те вată тесе калас килмест. Чунпа çамрăк вăл. Çавăнпа нумай пурăнать те. Хамăр çĕр-шывра, Украинăра, республикăра тата районта мĕн пулса иртнипе интересленсех тăрать, пăшăрханать, хак парать. Çамрăк чухне "Хыпар" тата "Советская Чувашия" хаçатсене статьясем çырнă.

– Çĕнĕлĕхсене эпир савăнса йышăнма пĕлместпĕр. Ас тăватăр-и, Андрей Лукин предприниматель Етĕрнере "Чайка" лавкка территорине пысăклатса ун умĕнче тротуар тума палăртнине пирĕн халăх епле йышăнчĕ? Халĕ савăнса пĕтерейместпĕр, çумăр çусан та пĕр йĕпенмесĕр лавккана кĕме пулать. Пуриншĕн те çÿреме меллĕ, таса та хитре, – тет Иван Васильевич. Хула илемленсе пынишĕн унта пурăнакансен савăнма пĕлмелле тесе шухăшлать ветеран. Уйрăмах вăл кăçал Хресчен урамĕнчи 8-мĕш çурт умĕнчи /хăй çавăнта пурăнать/ çула "Стройтранс" пĕрлĕхĕнче тăрăшакансем тĕпрен çĕнетсе юсанипе кăмăллă. Нумай хваттерлĕ çуртсен таврашĕнчи лаптăксене чылайранпа юсаман, çавăнпа вĕсем ванса-çĕмрĕлсе пĕтнĕ. "Тинех машинăсене лартма та вырăн пур, ача-пăчана выляма та", – тет вăл.

Етĕрне хула пуçлăхĕ А.Агаков пĕлтернĕ тăрăх – асăннă ĕçсене пурнăçлама кăçал республика бюджетĕнчен 1 млн та 848 пин тенкĕ уйăрнă, хула бюджетĕнчен – 464 пин. Мĕн палăртнине йăлтах пурнăçланă, Октябре – 50 çул урамри 88, 90 çуртсем умĕнчи тата К.Маркс урамĕнчи 111 тата 111 а çуртсем çумĕнчи лаптăксене çĕнетнĕ.

Çак кунсенче унта пурăнакансем Етĕрне хули 524 çул тултарнине уявланă. Хула кунĕ умĕн çавăн пекех Ленин тата Калинин урамĕсенчи çулсене лаптăкăн-лаптăкăн юсанă. Кунсăр пуçне кăçал Етĕрнери прокуратура патне каймалли çула та тĕпрен çĕнетнĕ.

Етĕрне хулине илемлĕ тăвасси вара унта пурăнакан кашни çынран килет. Нумай хваттерлĕ çуртсем патĕнче çулĕсене çĕнетрĕç-ха, анчах та унта чечексем ÿсмеççĕ. Сăмах май, балкон çинче те илемлĕх тĕнчи тума пулать. Шел, ун пек илеме туякан Етĕрнере хальлĕхе сахалтарах.

■ **Лилия ПЕТРОВА.**

Автор сăн ÿкерчĕкĕ

*Хастар*

# Пĕр çын «сурсах» çул пулнă

***Ку чухнехи пурнăçа тĕрлĕрен хаклакан пур: пĕри ăна вĕриленсех вăрçать, кăмăлсăрланать, тепри унпа киленсе çеç пурăннине калать. Унчченхине çĕрпе пĕлĕт пекех танлаштараççĕ. Паян чăнах та пирĕн районта çити-çитми пурнăçпа пурăнакан сахал. Пĕринчен тепри капмар çурт ăсталать, лайăх хуралтăнах çĕнетсе хальхилле тăвать.***

Килти условисем те хуларинчен кая мар: шывĕ пăрăхпа кĕрет. Тухать те. Чылайăшĕн çăвăнмалли ваннăйпа душ кабини те пур. Васканă чухне мунча хутса та ан тăр. Пÿрт ăш чиккинче тата епле капăр пулнине калама та кирлĕ мар! Ял çынни Европа сĕмне йăлтах килне куçарчĕ темелле. Унсăр пуçне кашни çемьен çăмăл автомашина е урăх техника пур. Хăшĕ-пĕрин вăл икшер те. Савăнса пурăнма сывлăх та килĕшÿ çеç кирлĕ.

Анчах та урам, ял сăн-сăпачĕ чăннипех те илемлĕ курăнтăр, халăхăн пуян пурнăçĕ çынсене савăнтартăр тесен вăл çеç çителĕксĕр. Ку таранччен Патăрьелти Красноармейски урамне кĕрлĕ-çурлă тапхăрта кĕрсе тухма та çукчĕ. Ватăсем те, çамрăксем те центра çитме вăрăм кунчаллă атă е калуш тăхăннă. Пĕчĕк ачаллă амăшĕ пепкин коляскине сĕтĕрсе халтан каятчĕ. Кĕçĕн класра вĕренекен ачасем мĕн чухлĕ пылчăк măшкăлĕ пулманши? Ара, урамăн нихăш енĕпе те утма çукчĕ-çке. Ача мар, пысăк çын та лачакана кĕрсе ÿкĕ...

Пăшăрхантаракан çак ыйтăва ку таранччен хастарсем вырăнти депутатсем патне те, ял тăрăхне те çитернĕ. Пăрĕ вара тапранниех туйăнмарĕ. Çак кунсенче вара чăнах та пирĕн урамра пурăнакансемшĕн кĕр еннелле сулăннă хĕвел ăшши те çуллахи пекех туйăнчĕ. Пирĕн урамшăн та уяв çитрĕ. Олег Лаврентьев усламçă çак пысăк ыйтăва хăй çине илсе асфальт сарчĕ. Хальхи пурнăçра ун пек калани çылăх пулсан та çутта тухнăнах туйрăмăр хамăра. Ÿркенмен хастар хăй пуçарулăхĕпе, тăрăшулăхĕпе, укçи-тенкине хĕрхенмесĕр пысăк ялăн пĕр урамне тирпей-илем кĕртнĕ çĕре усă курнăшăн турă пулăштăрах ăна, çемйине, ачисене телей патăр. Эпир ăна хамăр касра пурăнакансен ячĕпе чун-чĕререн тав тăватпăр, малашнехи ĕçре ăнăçу çеç сунатпăр.

**Красноармейски урамĕнче пурăнакансен ячĕпе М.ДОЛГОВА.**

Патăрьел районĕ

# Килĕшĕве пăрахăçланă

Федерацин патшалăх регистраци, кадастр тата картографи службин Чăваш Республикинчи управленийĕ Шупашкар хулин Кăнтăр-хĕвел анăç микрорайонĕнчи Социализм урамĕнче 9 хутлă, нумай хваттерлĕ çурт тума уйăрнă çĕрĕн килĕшĕвне пăрахăçланă. Çапла тума хистекен сăлтав: çав çĕр лаптăкĕн официаллă статусĕ – Ача-пăча скверĕ. Саккунпа килĕшÿллĕн скверсенче çуртйĕр çĕклеме юрамасть.

Асăннă микрорайонта тата тепĕр икĕ сквер – Чапаев ячĕллĕ завод çывăхĕнче тата «Салют» культура çурчĕ патĕнче. Юлашкине сквер теме чĕлхе çаврăнмасть. Кунта нимĕнле хăтлăх та çук. Мускав район влаç тытăмĕ тĕм-чечек лартса чăрманас темен. Муниципалитетăн «ЖКХ тата хăтлăх управленийĕ» унитарлă предприятие темиçе çул каяллах ăна тирпейлеме хушнă. Анчах унăн ĕçченĕсен вăхăт «тупăнман». Вырăнти влаç вара унпа урăх тĕллевпе усă курма йышăннă.

**А.СТЕПНОВ.**

*Сăмах – ял тăрăхĕн пуçлăхне*

# Çыхăнусем çирĕпленеççĕ

***Паянхи вăхăт пирĕнтен çирĕп ыйтать. Унăн кун йĕркине пĕр пăркаланмасăр пурнăçласа пымалла. Ăнсăртран пĕр ыйтăва кăна татса памасăр хăвар – вăл тепĕр ыйту сиксе тухсанах хăй пирки аса илтерет. Ку енчен илсен пире, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене, район администрацийĕ кашни эрнерех ирттерекен планеркăсем те, республикăри муниципалитетсен йĕркеленĕвĕсен Канашĕ ыттисен опычĕпе паллаштарас тĕллевпе тĕрлĕ региона илсе кайни те нумай пулăшаççĕ. Чăнах та ĕнтĕ, хальхи саманари çĕннине, усăллине алла илмесĕр, малтисенчен вĕренсе пымасăр ÿсĕм-çитĕнÿ тăвасси пирки шухăшлама та кирлĕ мар.***

Нумаях пулмасть эпĕ республикăри агропромышленноç комплексĕнче ĕçлесе тивĕçлĕ канăва тухнă ветерансен Вăрнар тăрăхĕнче ирттернĕ тĕл пулăвне хутшăнтăм. Унта Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ертÿçи Юрий Попов та пулчĕ, вăл хăй ертсе пыракан парламент ял çыннисен ыйтăвĕсене тивĕçтерекен саккунсем кăларас тĕлĕшпе мĕнлерех ĕçлесе пыни, депутатсен корпусĕнче аграри тытăмĕн çыннисем кирлĕ чухлех пулни çинчен каласа панă хыççăн ырă туйăм çуралчĕ. Республика ертÿлĕхĕ тыр-пул ÿстерекенсемпе выльăх-чĕрлĕх пăхакансем çине çурăмпа çаврăнса тăманни куç кĕретех. Паллах, лару-тăру кунашкал майпа йĕркеленсе пырсан эпир ерипен пулсассăн та малаллах тата тăваллах каяссине тĕпе хурăпăр.

Иртнĕ ĕмĕрĕн çитмĕлмĕш-сакăр вуннăмĕш çулĕсенче эпĕ Сĕнтĕрвăрри районĕнчи "Звезда" колхоза, унтан унăн никĕсĕ çинче йĕркеленнĕ совхоза ертсе пытăм. Çав çулсенче чăннипех те пысăк çитĕнÿсем тăватчĕ хуçалăх. Вăл районта кăна мар, республикăра та малта пыратчĕ. Урхас Кушкăсен ÿсĕмĕсене Мускаври Пĕтĕм Союзри Ял хуçалăх куравĕнче те пĕрре кăна мар кăтартнă. Экономика реформисем çула тухрĕç кăна, аграри тытăмĕ умне тăруках татса пама май çук çĕр-çĕр ыйту тухса тăчĕ. Ытти хăш-пĕр хуçалăх пекех пирĕн совхоза та панкрута кăларчĕç хайхи реформăна ырласа, хапăлласа йышăннă çамрăк демократсем. Манăн та юратнă ĕçпе сыв пуллашма тиврĕ. Çавах та ентешĕмсем эпĕ халăхпа мĕнлерех ĕçлеме пултарнине, çынсен тĕрлĕ ыйтăвне татса пама мĕнлерех ăнланупа хутшăннине тĕпе хучĕç, мана Урхас Кушкă ял тăрăхĕн пуçлăхĕн пуканне шанса пачĕç. Вулакансем ку пуçлăх сăпайлăх картĕнчен иртсех калаçать тесе ан шухăшлаччăр та – эпĕ халăх шанăçне тÿрĕ кăмăлпа, чун-чĕре хушнă пек пурнăçласа пырассине тĕп тивĕçĕм вырăнне хуратăп. Çурла уйăхĕнче мана Чăваш Республикин Патшалăх Канашне туса хунăранпа 20 çул çитнĕ ятпа кăларнă медальпе чысларĕç. Апла пулсан куллен-кун пурнăçлакан ĕçĕме çÿлти пуçлăхсем те курса тăраççĕ. Çакă мана хавхалантарать, мăнаçлантарать, тата та лайăхрах, тăрăшуллăрах ĕçлес туртăма вăратать.

Урхас Кушкă тăрăхĕ куç умĕнчех улшăнса, çĕнелсе пыни чун-чĕрене мĕншĕн ан савăнтартăр-ха! Вăл халĕ тахçан Михаил Федоров хăйĕн "Арçури" сăвăллă халапĕнче çырса кăтартнă вырăн мар. Ĕлĕк-авал кунти вăрмансенче арçури тĕлли-паллисĕр аташтарса çÿренĕ пулсан – паян пачах урăхла, чун-чĕрене савăк туйăм çуратакан ÿкерчĕке куратăн. Ял тăрăхне кĕрекен ялсен сăн-сăпачĕ куç умĕнчех çĕнелсе, хитреленсе пырать. Çынсем хăйсем те тăван тăрăха таса та тирпейлĕ тытас ĕçе хастаррăн та пуçаруллăн хутшăнма тытăнчĕç.

Хамăн тивĕçĕме пурнăçланă май эпĕ республикăри чылай çĕре çитсе куратăп, ĕçтешĕмсен ĕçĕ-хĕлĕпе паллашатăп, вĕсен лайăх тĕслĕхĕсене хамăр патăрта çул пама тăрăшатăп. Пĕр-пĕрин патне кайса çÿрени, вĕренсе пыни çав тери вырăнлă та пĕлтерĕшлĕ паянхи пурнăçра. Çав вăхăтрах тăван тăрăхăн аваллăхĕпе те кăсăкланатăп. Архивсенче упранса юлнă документсенчен çакна пĕлтĕм: ĕлĕк Урхас Кушкă ялĕ тавраричи пысăкки пулнă, кунти çынсем ирĕклĕх шыраса ытти çĕрелле пĕр шикленмесĕрех талпăннă. Вĕсем хальхи Етĕрне тата Йĕпреç районĕсене кĕрекен Мăн Чурашпа Пучинке ялĕсене никĕсленĕ. Паянхи кун икĕ ялĕ те – ял тăрăхĕн администрацийĕсен центрĕсем. Эпĕ Мăн Чурашпа Пучинке ял тăрăхĕсен администрацийĕсемпе çыхăну йĕркелесшĕн, çавна май вырăнти депутатсемпе ял хастарĕсене асăннă ялсене илсе кайса вĕсен пурнăçĕпе, ĕçĕ-хĕлĕпе тĕплĕнрех паллаштарасшăн. Кун пирки пĕр тĕл пулура Пучинке ял тăрăхĕн пуçлăхĕпе Николай Федоровпа сăмах хускатнăччĕ. Ĕçтешĕм сĕнĕвне ырласа йышăннăччĕ ун чухне. Вăл хăй те ял активĕпе пĕрле Урхас Кушкăна килсе курасшăн. Пирĕн мăн асаттесем никĕсленĕ Пучинкере пурăнакансем хальхи вăхăтра та авалтан упранса юлнă йăла-йĕркене тĕпе хунине, ăна паянхи çĕнĕлĕхсемпе пĕлсе, вырăнлă пуянлатса пынине лайăх пĕлетĕп эпĕ. Çакна Пучинкесем кашни çулах ирттерекен "Камай уйĕн урхамахĕ" турнир – ĕç лашисен уявĕ – уçăмлăн çирĕплетет...

Ял тăрăхĕн пуçлăхне кулленех вун-вун ыйту татса пама тивет. Хăш-хăш чухне йывăрлăхсен серепинех кĕрсе ÿкетĕн. Çавăн пек вăхăтра вара кашни хутĕнчех хам лайăх пĕлекен ĕçтешĕмсемпе çыхăну тытма тăрăшатăп: пĕр ăс – лайăх, икĕ ăс – тата та лайăхрах каларăша тĕпе хыватăп.

■ **Сергей ГРИГОРЬЕВ,**

**Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Урхас Кушкă ял тăрăхĕн пуçлăхĕ**

● ➡11, 12 стр.

ХЫПАР



# Андриян Николаев чăваш халăхĕн асĕнчех








**/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./.**

Пулас космонавтăн ачалăхĕ иртнĕ çурт умĕнчи виçĕ сыпăкран тăракан сценкăсене ялти культура керменĕ çумĕнчи халăх пултарулăхĕн коллективĕн ăстисем пĕчĕкçĕ çеç Унтрийкка çут тĕнчене килнине, ӳссе шкула чупнине, çулсем иртнĕçемĕн çар летчикĕ пулса тăнине, унтан космоса çĕкленнине сăнарларĕç.

**Савăнăçлă митингра Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев хăй те ачаранах Андриян Григорьевичран тĕслĕх илнине, унпа мăнаçланнине пĕлтерчĕ, унăн сăнарĕ, ячĕ яланах халăх асĕнче упраннине çирĕплетрĕ.**

Михаил Васильевич пурне те мухтавлă ентешĕмĕр пек пулма, унран тĕслĕх илме, тăван республикăмăршăн тăрăшса ĕçлеме-пурăнма ырă сунчĕ. Елена Андрияновна калани те пил евĕр илтĕнчĕ: "Атте хăйĕн тăван кĕтесне питĕ юрататчĕ, уншăн çав тери тунсăхлатчĕ, тăван чĕлхене питĕ хисеплетчĕ. Чĕлхене юратăр, хисеплĕр. Вăл пурнăç тымарĕ. Çуралнă кĕтесе яланах асра тытăр, унăн хăвачĕшĕн тăрăшăр. Тĕнчери чи хаклă çынсене эпĕ те атте чĕлхипе хисеплеме пĕлетĕп, вĕсем – аттепе анне!

Шупашкара тата Шуршăла, аттене çуратса ӳстернĕ çĕр çинче татах пулма тӳр килнишĕн эпĕ питĕ хĕпĕртетĕп. Ырă туйăмлă çынсен ытамне лекме, хаваслă сăнĕсене курма çав тери кăмăллă. Тĕлĕнмелле ырă туйăмсем çупăрлаççĕ мана, ăна палăртма сăмахăм çитмест. Пурне те ыррине кăна сунатăп..."

**Юлашкинчен каланă "Куратăр-и, паян та таса, уçă, лăпкă çанталăк. Атте кăмăлĕ пек..." сăмахсем те тӳрре тухрĕç. Чăннипех çакăн пек пулчĕ те çурла уйăхĕн 5-мĕшĕ – Андриянăмăрпа унăн амăшĕ Анна Алексеевна çуралнă кун.**

Олег Новицкий, Алексей Леонов, Петр Климук космос паттăрĕсем, Ю.Гагарин ячĕллĕ космонавтсене хатĕрлекен центрăн ертӳçин пулăшуçи Виктор Плакида хăйсен ĕçтешĕ тата пирĕн ентешĕмĕр, çавăнпа пĕрлех чăваш халăхĕ пирки нумай ăшă сăмах каларĕç. "Кăмăлне, тараватлăхне, тĕплĕлĕхне, ĕçченлĕхне уйрăммăн палăртмасăр хăварсан пире намăс та, – терĕç вĕсем пĕр шухăшлăн. – Çакăн пек халăх кăна çакăн пек паттăр ывăл çуратма пултарнă..."

Виктор Плакида çĕр-шывăмăрăн космонавтикине пропагандăлама пысăк тӳпе хывнăшăн центр пуçлăхĕ Раççей Геройĕ Юрий Лончаков космонавт летчик алă пуснă Дипломпа Космонавтика музейĕн директорне Александр Тукмакова, тĕп управçине Зоя Антоновăна тата сотрудникне Тамара Лебедевăна чысларĕ.

Нумай мероприяти иртнĕ çак кун. Вăл шутра – йăлана кĕнĕ спорт эстафети, "Сĕнтĕрвăрри – Шуршăл" агитчупу, районти "Пирĕн сăмах" хаçат редакцийĕ йĕркеленĕ çăмăл атлетсен турнирĕ, шкул ачисен чи лайăх сочиненийĕсен, сăввисемпе ӳкерчĕкĕсен конкурсĕ, шахматистсен тупăшăвĕ тата ытти те. Уяв вĕçленнĕ чухне вĕсен çĕнтерӳçисене сумлă хăнасем чысларĕç.

А.Николаевпа В.Терешковăн хĕрĕпе кĕрӳшĕ тата мăнукĕ Андрей, вĕсемпе пĕрле килнĕ хăнасем чăваш халăхĕ хăйсене мĕнле хисеплесе юратнине кашни утăмра туйса тăчĕç. Таса Адрианпа Наталья часавайне кĕрсе ашшĕн вил тăпри çине чечек кăшăлĕсем хучĕç, унăн ячĕпе çурта çутрĕç. **"Хыпар" хаçат корреспонденчĕ ыйтнипе чăвашпа вырăс хĕрĕ тăван республикăмăрти тĕрлĕ наци çыннине çакăн пек ăш пиллĕ сăмахпа тав турĕ. "Мана сирĕнпе, сирĕн хушăра пулма питĕ кăмăллă. Аттен юратнă кĕтесĕ маншăн та çывăх, вăл ырă туйăмсен оазисĕ пек туйăнать! Çак кĕтесе юратма мана атте вĕрентрĕ. Атте çуралнă кĕтесне, халăхне хăй пурнăçран кайиччченех асра тытрĕ, тăтăш пулайманран пăшăрханатчĕ те. Тăван халăх ятне ямарĕ, унăн сумне тата çӳлерех çĕклерĕ. Аттене ялан асра тытнăшăн, ăна хисепленĕшĕн сире чĕререн тав тăватăп".**

• • •

Шуршăл чăвашĕ хăйĕн паттăр ĕçĕсемпе тăван республикăна чапа кăларчĕ, Çĕр чăмăрĕн пĕр пĕчĕк пайĕнче чăвашсем пурăннине тĕнчене пĕлтерчĕ. Ĕнер Совет Союзĕн икĕ хут геройĕ, СССР космонавт летчикĕ, Чăваш Республикин хисеплĕ гражданинĕ Андриян Григорьевич Николаев çуралнăранпа 85 çул çитрĕ. Шел, хăй çак куна пурăнса çитеймерĕ.

Чăваш халăхĕн мухтавлă ывăлĕн çуралнă кунне халалласа К.В.Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх академи драма театрĕнче иртнĕ уява республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев, ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕ Юрий Попов, хĕрĕ Елена Терешкова-Николаева, ĕçтешĕсем, юлташĕсем, тăванĕсем, ăна юратса хисепленĕ çынсем йышлăн пухăнчĕç.

– Паян чăваш халăхĕшĕн, республикăшăн чăннипех те паллă кун. Ентешĕмĕре хисеплесе кунта килнĕ çынсем – Андриян Григорьевичăн юлташĕсем космонавтсем, çывăх тăванĕсем – уяв кăмăлне тата та ытларах çĕклеççĕ. Виççĕмĕш космонавт чăваш çĕрĕнче çуралса ӳснĕшĕн мăнаçланатпăр. Вăл пурнăçа амăшĕ вĕрентнĕ пек тӳрĕ пурăнса ирттернĕ. Ĕçченлĕхĕпе, маттурлăхĕпе, вăшаватлăхĕпе, ырă кăмăлĕпе ялан палăрса тăнă. Унăн вилĕмсĕр ятне ылтăн сас паллисемпе тĕнче космос историне çырса хунă. Çутă сăнарĕ ĕмĕр халăх асĕнче, ентешĕсен чĕрисенче упранĕ, – терĕ республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев уява уçнă тата пухăннисене саламланă май.

Андриян Григорьевич чăн-чăн этем пулнине унăн çывăх юлташĕ Алексей Леонов космонавт летчик та палăртрĕ:

– Пĕрремĕш хут Андриянпа 1959 çулта Сокольникире, госпитальте, тĕл пулнăччĕ. Космонавт пулма суйласа илнĕ виçĕ пин çамрăкран çирĕп тĕрĕслев витĕр çирĕмĕн тухрăмăр. Çав йыша мана та, Андрюшăна та лекме турă çырнă. Хальхи вăхăтра тĕнче уçлăхне хывнă çул-йĕр пирки тĕплĕ пĕлекенсем тăваттăн кăна тăрса юлтăмăр. Андриян Григорьевич пĕтĕмпех тӳссе ирттернисен – этемлĕх историне тăвакансен – шутĕнчен. Шанчăклă юлташ вăл. Кирек епле задание те чĕре хушнă пек, тӳрĕ кăмăлпа пурнăçланă. Тăван республика ырлăхĕшĕн нумай тăрăшнă вăл.

Алексей Леоновăн та çак кунсенче – çавра дата. Михаил Васильевич ăна 80 çул тултарнă ятпа саламларĕ, наградăпа чысларĕ.

– Чăваш Ене нумай хутчен килнĕ эпĕ. Андриянпа та, унсăр та... Кашнинчех тавралăха сăнатăп. Халĕ те акă самолетпа вĕçнĕ чухне курса тĕлĕнтĕм: йĕри-тавра тирпейлĕ, таптаса хирсем сарăлса выртаççĕ. Пĕлетĕп: кунта ĕçчен халăх пурăнать. Ертӳçисем ертсе пыма пĕлеççĕ тата, – хăйне пысăка хурса хакланăшăн тав тунă май палăртрĕ космонавт.

**РФ космонавт летчикĕ, Раççей Геройĕ Юрий Батурин чăвашсем хăйсен ентешне çапла чыслани тĕлĕнтернине пĕлтерчĕ:**

**– Космонавт çуралнă кунĕ – кашни шкулшăн, ял-хулашăн, пĕтĕм республикăшăн чăн-чăн уяв. Ентеше çапла сума суни пысăк чыс. Андриян Николаевич çакна тивĕç те. Вăл кашниншĕн, çав шутра космонавтсемшĕн те, çутă тĕслĕх.**

Хальхи вăхăтра Çĕр планета таврашĕнчи уçлăхра ĕçлекен космонавтсем драма театрĕпе çыхăнчĕç, мухтавлă ентешĕмĕрĕн çуралнă кунĕпе саламларĕç.

Ашшĕн çуралнă тата ас тăвăм кунĕсенче хĕрĕ Елена кашни çулах Чăваш Ене килет. Хальхинче мăшăрĕпе тата ывăлĕпе, çывăх çыннисемпе çитнĕ вăл. Андриян Григорьевичăн мăнукĕ Андрей аслашшĕ суйланă пурнăç çулне малалла тăсма, летчик пулма ĕмĕтленет. "Эпĕ – чăваш", – тет вăл хăй пирки мăнаçлăн.

**Елена Андрияновна сăмах калама пуçласан чылайăшĕн куçĕсем шывланчĕç.**

**– Атте юнашар çуккине ĕненессĕм килмест. Туятăп: вăл ялан çумра. Эсир манăн аттене асра тытни, манманни чуна чĕрĕлĕх парать. Ахăртнех, халĕ вăл çӳлтен сăнать. Хăйне еплерех сума сунине курса савăнать. Унăн ячĕпе чаплă уяв йĕркеленĕ, унăн тăван çĕр-шывне юлташĕсем, пĕрле ĕçленĕ космонавтсем килнĕ. Сире пуриншĕн те тавтапуç! – юлашки сăмаха вăл чăвашлах каларĕ.**

Ентешĕмĕрпе пĕрле ĕçленĕ космонавтсем Андриян Григорьевичпа çыхăннă чылай саманта аса илчĕç. Чăваш халăхĕн мухтавлă ывăлĕн уçлăхалла выртнă çулĕ такăр пулманнине экран çинче пĕрин хыççăн тепри улшăнакан кадрсем, сăн ӳкерчĕксем туллин çирĕплетрĕç. Тĕллеве пурнăçа кĕртессишĕн сахал мар вăй хума тивнĕ унăн. А.Николаевăн мухтавлă ĕçĕ-хĕлĕ нихăçан та манăçмĕ. Ăна малалла тăсакансем ӳссех пыраççĕ. Шуршăлти шкул ачисем "Николаевăн çутă сăнарĕ вĕсене пурнăçра тĕрĕс çул суйлама пулăшассине, унăн тĕслĕхĕпе хавхаланса Раççее юрăхлă çынсем пулса ӳсме тăрăшнине" пĕлтерчĕç.

Космонавтсене хатĕрлекен Ю.А.Гагарин ячĕллĕ ăслăлăх тĕпчев центрĕн пуçлăхĕн пулăшуçи Виктор Плакида ЧР Пуçлăхне М.Игнатьева тата ЧР Патшалăх Канашĕн Председательне Ю.Попова космос ĕçне аталантарма пысăк тӳпе хывнăшăн Хисеп паллисемпе чысларĕ.

Мĕнле уяв мухтавлă Андриянăмăр юратнă юррисĕр ирттĕр? Симфони капелли "Вĕçвĕç, куккук" юрра шăрантарчĕ. Уява концерт малалла тăсрĕ.





**Юрий СТЕПАНОВ,**
**Валентина БАГАДЕРОВА.**

Сăн ӳкерчĕксене "СЧ" хаçатран илнĕ.

ВЫРĂНТИ ХАЙ ТЫТĂМЛĂХ

*Депутат тата унăн ĕç-хĕлĕ*

# Спорт — вĕсемшĕн пурнăç

***– Раççей Президенчĕ Владимир Путин “Раççей – спорт çĕр-шывĕ” спорт форумне тата физкультурăпа спорта аталантарас енĕпе Раççей Федерацийĕн Президенчĕ çумĕнчи Канашĕн ларăвне Чăваш Енĕн тĕп хулинче, Шупашкарта ирттерни пирĕншĕн чыс, хисеп çеç те мар, республика аталанăвне Раççей шайĕнче тепĕр хутчен пысăк хак пани. Çакăншăн эпĕ питĕ хĕпĕртерĕм, савăнтăм. Пĕлтерĕшлĕ форума Сочире е урăх çĕрте те мар, уйрăмах чăвашсен çĕр-шывĕнче йĕркеленине коллектив та ăшшăн йышăнчĕ,– кăмăллăн пуçларĕ хăйĕн калаçăвне Патăрьелĕнчи “Паттăр” физкультурăпа спорт комплексĕн директорĕ, районти спорт каçалăкĕнче хĕрĕх çула яхăн пахалăнă Алексей Краснов. – Спорт – пирĕншĕн пурнăç, аталану, шанчăклă малашлăх. Унпа “чирленĕ” çын пурнăçра хăйĕн тĕллевне тупатех.***

Чăваш Ен спорт форумне хатĕрленнĕ тапхăрта районта физкультурăна, массăллă спорта аталантарас, сывă пурнăç йĕркине пропагандăлас, çавна май çитĕнекен çамрăк ăрăва пурнăçра тĕрĕс çул суйласа илме пулăшас ĕçре спортсменсем ыттисене витĕм кӳресси мĕнле пулса пынине пĕтĕмлетни кирлех. Çак тĕллевпе курса калаçрăмăр та район Пухăвĕн депутачĕпе Алексей Красновпа.

Юхмапа Пăла тăрăхĕ паллă спортсменсемпе пуян. Халĕ вара унăн хунавĕсем тата çĕнелсе, çамрăкланса пыраççĕ. Юлашки çулсенче район спортсменĕсем республикăра çитĕнӳ хыççăн çитĕнӳ туни савăнтарать. Сăмахран, çак кунсенче çеç район администрацийĕн пуçлăхĕ Н.Глухов ачасемпе çамрăксен спорт шкулне çӳрекен хастар велосипедистсене икĕ кустăрмаллă “хурçă ут” парнелерĕ. Мĕн тери пысăк савăнăç пулчĕ вăл ачасемшĕн! Парнене вара ДЮСШна çӳрекенсем хайсемех çĕнсе илнĕ, республикăра 2013 çулта 700 ача е ытларах çӳрекен спорт шкулĕн коллективĕсен хушшинче малти вырăна тухса 100 пин тенкĕлĕх сертификата тивĕçнĕ. Сăмах май, иртнĕ çул пирĕн спортсменсем Чăваш Енте йĕркеленĕ виçĕ конкурс-тупăшура пĕрремĕш вырăн йышăннине ăнсăртран пулнă çĕнтерӳ тесе хаклаймăн. Районта паянхи кун спортăн тĕрлĕ енĕ комплекслă аталанса пынине палăртмалла. Акă сăртлă-туллă çулпа велосипедпа ăмăртассипе тĕнче шайне тухнă паллă спортсменка Ирина Калентьева ентешĕсене анлă çул уçса пани те кăмăллă. Чылай çул ĕнтĕ маунтинбайк енĕпе йĕркелекен республика ăмăртăвĕ шăпах вăл çуралнă тăрăхра – Нăрваш Шăхалĕнче иртет. Юлашки çулсенче çак ялтанах тухнă тепĕр спортсменка Ирина Петрова Раççей шайĕнче хăйĕн ятне çĕклени те пирĕншĕн пысăк чыс, савăнăç. Авăн уйăхĕн 12-мĕшĕнче вăл хăйĕн вăйне Итали çĕр-шывĕнче иртекен тĕнче чемпионатĕнче тĕрĕслĕ.

Район халăхне массăллă спорта явăçтарс тĕллевпе те сахал мар ĕçлеççĕ тренерсемпе преподавательсем. Çулла триатлон енĕпе республикăри пысăк ăмăртăва Патăрьел районĕнче йĕркелерĕç. Пирĕншĕн вăл та пĕр йĕрсĕр иртмерĕ, уйрăм спортсменсем начар мар кăтарту турĕç. Максим Ялуков вара çак пысăк ăмăртура район чысне хӳтĕлесе республика чемпионĕн ятне тивĕçрĕ.

Ачасемпе çамрăксене çеç мар, вăй питтисемпе аслă ăрури хастарсене те спорта явăçтарас тесе çулталăк тăршшĕпе сахал мар ăмăрту, турнир иртет. Вĕсем пирки сăмах пуçарсан Алексей Егорович чăн малтанах çамрăк ачасемпе ял тăрăхĕсен хушшинче ирттерекен спартакиадăсене асăнчĕ. Районти спорт лидерĕ шкул ачисенчен чăн малтанах Первомайски, Аслă Чемен, Патăрьелти пĕрремĕш вăтам шкулсене, ял тăрăхĕсенчен вара Туçасене, Аслă Чеменсене, Нăрваш Шăхальсене, Пикшиксене, Çĕнĕ Ахпӳртсене асăнчĕ. Район шайĕнче йĕркелекен ăмăртусенчен айккинче пăрăнса юлакан та пур: Ыхра Çырми, Ксыл Чишма, Çĕньял, Шăнкăртам тата ытти хăш-пĕр ял тăрăхĕ. Вĕсенче спорт енне туртăнакансем е вĕсене куракансем, хак паракансем çук-ши? Физкультурниксен кунĕсенче те, уйăхсерен йĕркелекен «Сывлăх кунĕсенче» те ытларах пĕр коллективсемех старта тăраççĕ, кире пуканĕ йăтаççĕ, юлашки çулсенче вăй илсе пыракан чушкăлла та выляççĕ, алă вăйне виçеççĕ тата ытти те.



• *Патăрьелĕнчи “Паттăр” физкультурăпа спорт комплексĕн директорĕ А.Красновпа /сылтăмри/ аслă инспекторĕ Н.Паймуллин.*

Спортпа туслă уйрăм хастар, çемье, ушкăн пирĕн районта сахал мар. Республика, Раççей, тĕнче шайне тухнă паллă спортсменсен йышĕ çулсеренех ӳсет.

Чăваш Ен Пуçлăхĕ палăртнă тăрăх, форума Раççейрен тата чикĕ леш енчи 20 çĕр-шывран 3 пине яхăн çын хутшăнасси пирки пĕлтернĕ. Вăл шутра, пирĕн тăрăхран тухнă паллă спортсменсем, уйрăм хастарсем пуласса та шанатпăр.

“Пирĕн тĕллев – Пĕтĕм тĕнчери спорт форумне тивĕçлипе ирттересси. Çав вăхăт тĕлне спорт площадкисемпе объекчĕсене кăна хатĕрлемелле мар. Пирĕншĕн потребительсен рынокĕн тата пулăшу паракан тытăмри предприятисем мĕнле ĕçлесси те пĕлтерĕшлĕ”,– палăртнă Михаил Игнатьев форума ирттерес енĕпе ĕçлекен республикăри йĕркелӳ комитечĕн ларăвĕнче.

**ЦИФРĂСЕМПЕ ФАКТСЕМ:**

**• Районтан тĕнчен 13 спорт мастерĕ тухнă, 2-шĕ – Раççей спорт мастерĕ. Унсăр пуçне вуншар спорт мастерĕпе кандидачĕ.**

**• Районти “Паттăр” физкультурăпа спорт комплексĕнче тата стадионта куллен 300 çын хăйĕн сывлăхне çирĕплетет. Сусăр çынсем эрнере икĕ хутчен ФСК çăмăллăхĕпе тӳлевсĕр усă кураççĕ.**

**• Хальхи вăхăтра Олимп резервĕсем хатĕрлекен училищĕсенче районтан 27 çамрăк пĕлӳ илет. Кăçал тепĕр виçĕ спортсмен унта вĕренме кĕнĕ.**

**• Района кашни уйăхрах сывлăх кунĕсем, район администрацийĕн пуçлăхĕн, “Авангард” хаçат парнисене çĕнсе илессишĕн спартакиада, тĕрлĕ турнир иртет.**

**Альбина ЕГОРОВА.**
Автор сăн ӳкерчĕкĕ

*Çĕр*

# Чăн хуçах-и эсир?

***Çĕр лаптăкĕ пур-и сирĕн? Чăн хуçах-и эсир унта? Документсем тăрăх çаплах пулĕха. Ыйтăвăм вара çĕрпе мĕнле усă курнине пырса тивет.***

## *Çĕртен сивĕнсех пыратпăр-ши?*

Чăннипе, лаптăк хуçисем кăна мар, арендăна илнĕ çынсем те пулăхлă тăпрапа туллин усă курманнипе çинеçинех тĕл пулаççĕ Россельхознадзорăн инспекторĕсем. «Апла пулсан мĕн тума арендăна илеççĕ?» – тейĕ нумайăшĕ. Вырăнлă ыйту. Анчах асăннă ведомство ĕçченĕсен тивĕçĕ ăна уçăмлатассипе çыхăнман. Республикăра ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсемпе тĕллевлĕ усă курни ытларах кăсăклантарать специалистсене.

Çĕр саккунĕсене пăхăнманнине вара тăтăшах асăрхатăн. Çурла уйăхнех илер. Вăрмар районĕнче пулăхлă тăпрана никамран ирĕк илмесĕр вырăнтан тапратнă тĕлĕшпе протокол хатĕрленĕ. Шупашкар районĕнчи çĕрте йывăр металсем тупнă. Комсомольски районĕнче рекультиваци ирттерменни куçа тăрăннă. Çум курăка пĕтересшĕн тăрăшман тĕслĕхсемпе 14 протокол çырма тивнĕ – Канаш, Вăрмар, Вăрнар, Çĕрпӳ, Элĕк районĕсенчи лаптăксен тĕлĕшпе.

Çĕре ахаль вырттарни пирки асăрхатарсан чылайăшĕ çитменлĕхе палăртнă вăхăтра пĕтерет. Хăйсем вăй çитерейменсен лаптăка тĕреклĕрех хуçалăхсене арендăна парса ыйтăва татакансен йышĕ те сахал мар. Япăх мар ку пулăм.

Анчах çакă пур чухне те çĕре хута янине пĕлтермест çав. Акă нумаях пулмасть Муркаш районĕнчен управление самай пысăк лаптăкра тĕрлĕ ӳсентăран ешерни пирки хыпар çитрĕ. Административлă тĕпчев ирттернĕ май арçын 15,5 гектара 49 çуллăха арендăна илни палăрнă. Чăнах та лаптăкĕ пĕчĕк мар. Анчах та хуçи ял хуçалăх продукцийĕ туса илме тăрмашман та. Сухаласа акман вырăнта тем çӳллĕш хыт-хура ашкăрнă. Арендатора тĕрĕслев пирки пĕлтерсенех хăй çинчен яваплăха сирме васкать. Район администрацийĕпе тунă килĕшĕве татать.

## *Çĕрĕ пур. Ĕçĕ курăнмасть*

Çĕрпӳ районĕнче вара 32 гектара пусă çаврăнăшне кĕртеймен тĕслĕхпе тĕл пулнă инспекторсем. Тăпран пулăхлăхĕ чакассинчен нимĕн те туман çынсене административлă майпа явап тыттарма тивнĕ.

Управлени тата прокуратура ĕçченĕсем Элĕк районĕнче икĕ ял тăрăхĕнче – Питĕшкасси тата Крымсарайккă – вырнаçнă 26 лаптăка тĕпчеНĕ. Вĕсенчен виççĕшĕнче /пĕтĕмпе 127,26 гектар/ йывăç-тĕм ӳссе 4 метра çитнĕ! 1061,03 гектара манăçа кăларни икĕ çул та иртнĕ ĕнтĕ. Палăртмалла, кусем йăлтах – пĕр хуçалăх çĕрĕ.

Асăннă районта тепĕр хуçалăх çĕрĕсене те пăхса çаврăннă прокуратурăпа управлени специалисчĕсем. Кунта та савăнмаллиех çук. 2009 çултанпа çум курăкпа кĕрешмен. Агротехника ĕçне пурнăçламаннипе 265,53 гектарăн пахалăхĕ чакса пырать.

Çак районти Шĕмшеш ял тăрăхĕнчи 7 çын çĕрĕсене тĕрĕсленĕ. 5,16 гектар тĕлĕшпе протокол çырмасăр май килмен. Ара, лартмаççĕ те, акмаççĕ те.

Кунашкал ӳкерчĕк ытти çĕрте те тĕл пулать. Çĕрпӳ районĕнче, сăмахран, пĕр тăрăхри 32 гектар ана чăн хуçа аллине туймасть. Метикасси ял тăрăхĕнче пулнă май вара 21,59 гектарпа тĕллевлĕн усă курман тĕлĕшпе административлă ĕç пуçарнă.

Канаш районĕнчи Асхва ял тăрăхĕнче те саккунпа килĕшӳллĕн çĕре çил тата шыв эрозийĕнчен, ытти япăх витĕмрен хӳтĕлес тата пулăхлăха упраса хăварас тесе ятарлă ĕç ирттерменнине пула 5 çынна яваплăх пирки аса илтерме тивнĕ. Шупашкар районĕнче пысăк пĕр хуçалăх арендăна илнĕ 100 гектара çум курăк пусса илнĕ.

Тĕрĕслев вĕçленмен-ха. Çак списока ытти районсем кĕмĕç тесе калама васкар мар. Унта лекес марри хамăртан килет.

**Надежда ВАСИЛЬЕВА,**
**управлени ĕçченĕ**

*11, 12 стр.*

ВЫРĂНТИ ХĂЙ ТЫТĂМЛĂХ

*Тĕслĕх*

# Староста тăк – староста!..

"Митрофан Авдеев пек çынна кăнтăрла хунарпа шырасассăн та тек тупаяс çук, – тет Ирçе Çармăс ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Сергей Карсаков. – Вăл мана кулленех пысăк пулăшу парса пырать. Эпĕ вăхăтлăх кăна урăх çĕре тухса кайнă самантсенче те хама лăпкă тытма тăрăшатăп. Пĕлетĕп: пуçлăха Митрофан Александрович улăштарать. Тен, хамран та лайăхрах йышăнать пуль ман пата тĕрлĕ ыйтупа килекен çынсене?"



● *Ял хастарĕн мăшăрĕ Вера Авдеева.*

Сергей Карсаков вырăнти хăй тытăмлăх органне чылайранпа ертсе пырать пулсассăн та Митрофан Авдеевран, Ирçе Çармăс ялĕн старостинчен, ыррине илмешкĕн пăрахмасть. Ара, унăн пултарулăхĕнчен, вăл халăхпа еплерех чĕлхе тупса калаçма ăсталăх çитерниннчен, кунтан та ытларах, ял-йыш умне кирек хăçан та сывă йăла-йĕркене тытакан çын тухнинчен тĕлĕнеççĕ Ирçе Çармăссем. Ахальтен мар ĕнтĕ ял старости мĕн авалтанах йĕркеленнĕ ирçе ялĕнче "урă пурнăç йĕркин" хутлăхне туса хунă.

Ку тăрăха пуçласа килекенсене пĕр тĕлĕнтермĕш кĕтсе тăрать: ирçесемпе чăвашсем пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнакан сала урамĕсенче тĕлли-паллисĕр, ыйту палли пек курăнакан çапкаланчăк çамрăксем унталла-кунталла çӳренине кураймăн. Митрофан Авдеев староста тивĕçне пурнăçлама тытăниччен пулнă-ха вĕсем, хăйсен ятне ярса çӳрекенсем. Ял-йыш Митрофан Александровича хисеплĕ тивĕçе шанса панă хыççăн салара чылай хушă хуçаланнă "тӳнтерле" тĕслĕхрен шăрши-марши те юлман. Тулли черкке енне кармашакансем паян хăрамаллипех хăраççĕ старостăран. Пĕррехинче хĕрĕнкĕ тăванне те штраф тӳлеттернĕ теççĕ. Апла тăк вăл никама та, енчен те пурте пĕлсе тăракан, ăна пăхăнма тивĕçлĕ йĕркене пăснă тĕслĕх тупăнсан, явап тыттармасăр хăвармасть. Акă мĕншĕн хисеплет ăна ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Сергей Карсаков. "Митрофан Александрович – манăн сылтăм алă, – тет Сергей Николаевич. – Çавăн пек çынсем ытларах пулсан пирĕн ял тăрăхĕ пур енĕпе те малтисен йышĕнче пулмалла та.

Алăри пӳрнесем те пурте пĕрешкел марри пирĕн тăрăхра та уçăмлăн сисĕнсе тăрать. Хирĕçле уйрăмлăхсем вырăн ан тупчăр тесе, старостăпа пĕр пулса, пĕр чĕлхе тупса ĕçлесе пырассине чи малти вырăна хуратпăр та эпир".

Митрофан Авдеева çитмĕл пилĕк çултан иртнĕ çын тесе калаймăн. Кĕлеткине Ирçе Çармăс çывăхĕнченех юхса иртекен Кĕтне шывĕ хĕрринче ӳсекен хăва пекех тӳрĕ тытать, хусканăвĕсем вăр-вар та çирĕп, утти хăш-пĕр çамрăка ăмсантармалли – çăмăл та тикĕс. Çакăн вăрттăнлăхне ăçта шырамалла-ши? Хăйне ку ыйтăва парсан староста сăпайлăн акă мĕнлерех хушса хучĕ: "Эпĕ нихăçан та пирус туртман, ăш-чикĕме никотинпа вараламан. Алла хушăран тулли черкке тытса пăхатăп, анчах пуç ыратмалла пĕрре те ĕçсе курман. Мĕн çамрăкранах спортпа туслă. Маншăн чи çывăххи вăл – кире пуканĕ йăтасси".

Аса илтĕм: "Çĕнĕ пурнăç" хуçалăх чиперех ĕçлесе пынă çулсенче Ирçе Çармăс тăрăхĕнче кăна мар, районта та малта пынă Митрофан Авдеев механизатор хăй вăхăтĕнче Йĕпреç районĕнче ирттерекен Акатуйсенче икĕ пăт таякан кире пуканне йăтакансен хушшинче чи хастарриччĕ, вăл Ĕçпе юрă тата спорт уявĕнчен кашни хутĕнчех "чĕрĕ" парнепе – такапа – каятчĕ. Кун пирки аса илтерсен староста çапла каларĕ: "Эпĕ паян та спорта чи малти вырăна хуратăп, ирпе 32 килограмлă кире пуканне аллăма илетĕп. Паллах, халь çамрăк чухнехилле 70-80 хут çĕклейместĕп ĕнтĕ, çапах та унпа пĕр кана йăпаннă хыççăн хама чи телейлĕ çын вырăнĕнче курса тăма пуçлатăп".

Ял старости чăваш халăхĕн тĕп хаçачĕпе "Хыпарпа" туслă. Ăна 1954 çултанпах çырăнса тăрать. "Утмăл çул пире хăйĕн хыпарĕсемпе вăй-хал, хавхалану паракан хаçатсăр самантлăха та пурăнаймастпăр эпир мăшăрăмпа, Вера Спиридоновнăпа, – почта килнĕ-килменех "Хыпара" ярса тытатпăр", – тет кил хуçи.

■ **Геннадий КУЗНЕЦОВ.**
Йĕпреç районĕ.

Анатолий ФИЛИППОВ
сăн ӳкерчĕкĕ

# Саккун проектне ырланă

***Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн черетлĕ ларăвĕнче "Чăваш Республикин вырăнти хăй тытăмлăха йĕркелесси çинчен" саккунне улшăнусем кĕртесси çинчен" саккун проектне ырланă. Унпа правительство членĕсемпе ведомствăсен ертӳçисене юстици министрĕ Надежда Прокопьева тĕплĕ паллаштарнă, чылай ыйтăва хуравланă.***

Çынсен, общество организацийĕсен, вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен специалисчĕсен тата политика партийĕсен регион уйрăмĕсен ертӳлĕхĕн шухăшĕсене тĕпе хурса, вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен халĕ ĕçлекен тытăмне çĕнетсе лайăхлатас, унăн усăлăхне ӳстерес тĕллевпе саккун проекчĕ муниципалитет район пуçлăхне халăх сасăлавĕпе суйлама сĕнет. Хăйĕн территорийĕнчи çынсен шанăçне тивĕçнĕ пуçлăх çав самантран икĕ тивĕç – район депутачĕсен Пухăвĕн председателĕн тата – сити-менеджер – пурнăçлама тытăнать. Малашне пĕр районăн икĕ пуçлăх пулмасть. Муниципалитет районăн представитель /саккун кăларакан/ органне йĕркелемелли принцип, çавăн пекех хула округĕсемпе хула тăрăхĕсен пуçлăхĕсене суйламалли йĕрке улшăнмасть.

Ларура муниципалитет районăн халăх сасăлавĕпе суйланнă пуçлăхĕ хăйĕн тивĕçне чыслăрах пурнăçлассине палăртнă. Федераци саккунлăхне улшăнусем кĕртнĕ хыççăн ял тăрăхĕсен 17 полномочине района панă чухне – уйрăмах. "Яллă районсенче малтанхи – район администрацийĕсен пуçлăхне хушупа çирĕплетнĕ, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене халăх сасăлавĕнче суйланă чухнехи – тытăм тĕрлĕ сăмах-юмах, тавлашуллă, хирĕç тăруллă самант çуратнă. Çав вăхăтрах çак тытăмах хула округĕсенче хăйĕн усăлăхне кăтартса панă", – тенĕ Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев.

Ларура Чăваш Республикин хăш-пĕр саккун актне, "Чăваш Республикин вырăнти хăй тытăмлăх суйлавĕ çинчен" саккунне улшăнусем кĕртнине ырланă. ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕсем вĕсене кĕçех юридици вăйĕ парĕç.

■ **А.СТЕПНОВ**

*Лайăх хыпар*

# Илемленет урам сăнĕ

***Пушкин, Ирĕклĕх урамĕсене асфальт, Ленин проспектĕнчи тротуара брусчатка сарнă. Çулсене лайăхлатнă чухне пепкеллĕ амăшĕсене, кӳмепе çӳрекен инвалидсене меллĕ пултăр тесе автоçулсене тротуарпа çыхăнтарнă.***

"Халĕ питĕ лайăх. Унччен Пушкин тата "Çĕнтерĕве 30 çул" урамсем хĕресленнĕ вырăнта лакăм-тĕкĕме пула çав тери кансĕрччĕ. Çул саракансем питĕ лайăх ĕçленĕ. Хулана ертсе пыракансене Канашăн чи ватă урамĕсенчен пĕрне йĕркене кĕртнишĕн пысăк тав", – савăнăçне пытараймасть ĕç ветеранĕ С.Максимов. Святослав Иванович 30 çула яхăн çак тротуарпа ĕçе çӳренĕ, халĕ Асель ятлă мăнукĕпе уçăлма тухать.

Пушкин урамĕн хĕррипе лартнă тĕмсене тикĕсленĕ, çум курăкран тасатнă, газонсенчи курăка çулнă. Канаш урамĕнчи йывăççсен турачĕсене касса тиесе тухнă. Автовокзал çывăхĕнчи транспорт çаврăмĕн лаптăкĕнче тĕрлĕ чечек лартнă. Чукун çул, Чернышевский, Тăвай шоссе, Чкалов тата чылай урамра газонсене тирпейлеççĕ. Кооператив, Чукун çул урамĕсенчи бордюрсене тасатаççĕ, сăрлаççĕ.

**Виталий АЧЧА.**
Канаш хули.

*Кӳршĕ районсенче*

# Паллă спортсмена асра тытса

**Вăрнар.** Район центрĕнчи историпе тавра пĕлӳ музейне чылайранпа ертсе пыракан Елена Шариновăна Вăрнарсем питĕ лайăх пĕлеççĕ. Елена Ивановна хăйĕн пĕр ĕçне пурнăçланипе кăна çырлахмасть. Вăл общество пурнăçне хастар хутшăнать, район историйĕпе çыхăннă материалсене пухать, тĕп вулавăшпа килĕштерсе ĕçлет. Нумаях пулмасть ăна ЧР Пуçлăхĕн хушăвĕпе "Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ" хисеплĕ ятпа чысланă.

Çак кунсенче вулакансем патне "Прерванная дистанция" кĕнеке çитрĕ. Авторсен ушкăнĕ хатĕрлесе кăларнă кĕнекере Елена Шарипова çырнă темиçе статья пур. "Эпĕ хамăн асаттен, иртнĕ вăрçăчченех ялти спортсменсен хушшинче чупассипе СССР чемпионĕ пулса тăнă Тимофей Петровăн кун-çулĕпе тата ĕçхĕлĕпе тăтăшах кăсăкланнă, – тет Елена Ивановна. – Музейра ĕçленĕ май ун пирки пуçтарăнса кайнă документсене ахаль вырттарас темерĕм. Тимофей Петров, Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинче пуç хунăскер, паянхи яш-кĕрĕме сывă пурнăç йĕркине тытса пыма хавхалантаракан сăнар. Кĕнекене хатĕрленĕ çĕре манăн атте, асатте фронта тухса кайнă чухне 5 кунра кăна пулнă, кайран хăйĕн пĕтĕм пурнăçне чукун çулĕпе çыхăнтарнă Иван Петров уйрăмах нумай тăрăшрĕ. Сăмах май, типографи тăкакĕсене пĕтĕмпех вăл саплаштарчĕ. Çывăх вăхăтрах районти тĕп вулавăшра çак кĕнеке тăрăх вулакансен конференцине ирттересшĕн. Пуласлăхшăн вăтăр виççĕрех пуç хунă мухтавлă ентешĕмĕрĕн çутă сăнарне ĕмĕр тăршшĕпех асра тытса пурăнмалла пирĕн..."

# Вилĕмсĕр поэт хавхалантарнипе

**Йĕпреç.** Хула тăрăхĕн администрацийĕ пуçарнипе поселокра чечексен куравĕ иртрĕ. Унта хутшăнма кăмăл тунă хĕрарăмсен хушшинче Йĕпреçре пурăнакан Надежда Мосолова та пулчĕ. Надежда Николаевна хăй Куславкка тăрăхĕнче çуралнă, упăшкипе, вăрман хуçалăхĕн инженерĕпе Виталий Мосоловпа вăтăр çул каялла Йĕпреçре тĕпленнĕ. Надежда Николаевнăпа Виталий Николаевич – çут çанталăка, чĕрĕ илеме çав тери юратакан çынсем. Вĕсем кăçалхи курава тăратнă ĕçĕсене жюри чи пысăк балсемпе хакларĕ. Мăшăр ăсталанă "Нарспипе Сетнер" композици вара курав хыççăн хула тăрăхĕн администрацийĕн çурчĕ умĕнче вырăн тупрĕ. Иртен-çӳрен ăсталанă скульптура тĕлне çитсен хăй сисмесĕрех чарăнса тăрать.

"Çитес çул пирĕн республикăра Константин Иванов çулталăкĕ пулассине эпир хапăл туса йышăнтăмăр, – теççĕ Мосоловсем. – Ку вăхăт тĕлне вилĕмсĕр "Нарспи" поэма тăрăх тата темиçе сюжета чун кĕртесшĕн-ха".

# Ял çыннисен çывăх тусĕ

**Канаш.** Йăлмачча ялĕнче пурăнакан Михаил Васильев – тĕрлĕ енлĕ аталаннă çын. Вăл ăста платник та, хĕртнĕ тимĕре туптаса тем те пĕр тума пултаракан тимĕрçĕ те. Анчах ку тăрăхра тĕпленнĕ çынсем Михаил Васильева ырми-канми шыравçă, маттур тавра пĕлӳçĕ тата канăççăр чун-чĕреллĕ сăвăç пулнипе пĕлеççĕ. Унăн хайлавĕсем районти "Канаш ен" хаçатра кун çути кураççĕ.

Нумаях пулмасть Шупашкарти "Çĕнĕ Вăхăт" издательствăра ялти сухаçăн сăвă кĕнеки çапăнса тухрĕ. Михаил Васильев Ачча тата Янкăлч ял тăрăхĕсене кĕрекен ялсенче тăтăшах пулать, вулакансемпе ирттерекен тĕл пулусенче тыр-пул ăстисемпе выльăх-чĕрлĕх пăхакансене хумхантаракан ыйтусене хускатать.

**Геннадий ВАСИЛЬЕВ.**

«Вырăнти хăй тытăмлăх» проект проект ЧР Информаци политикипе массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе пурнăçланать.
Юрий СТЕПАНОВ хатĕрленĕ. ● Çырăр: Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13, «Хыпар». ● Шăнкăравлăр: Тел. /8352/ 28-85-01.

# ЫЙТУ ХУРАВ

## Ĕç тупма пулăшаççĕ

**Çынсем хăйсем те республика тулашĕнче ĕç тупса вырнаçаççĕ-ха. Çавăн пекех тĕрлĕ регионта ĕç тупса парассишĕн яваплă организацисем те пур. Ку енĕпе ĕçлекен патшалăх органĕсене хăçан йĕркеленĕ?**

**С.ТАРАСОВ.**
Сĕнтĕрвăрри районĕ.

Ĕçсĕрлĕхĕн малтанхи тапхăрĕсенче /иртнĕ ĕмĕрĕн 20-мĕш çулĕсенче/ Чăваш Ен çыннисене çĕр-шывăн ытти регионне ĕçлеме ярассине РСФСР Ĕç халăх комиссариачĕн заданийĕпе пурнăçланă. 1921 çулхи утă уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 1922 çулхи çĕртмен 1-мĕшĕччен 14,5 пине яхăн рабочи тата вĕсен çемйисем Чăваш автономийĕ облаçĕнчен тухса кайнă.

Çĕр-шывра талккишпех ĕçсĕрлĕх хуçаланма пуçласан вербовка вĕçленнĕ. Индустриализаци тапхăрне кĕрсен çĕнĕрен тапраннă. 1926-1927 çулсенче республика тулашне 989 çын тухса кайнă. Промышленноç строительстви вăйилнĕ май ĕç вăйĕ ытларах кирлĕ пулнă. Уйрăмах вăрман касса хатĕрленĕ çĕрте, стройкăсенче çын çитмен.

1930 çулсен пуçламăшĕнче рабочисене план тăрăх ĕçлеме яма тытăннă. Чăваш Ен тулашне вăхăтлăх е яланлăх ĕçлеме çулсерен вун-вун пин çын тухса кайнă. 1929-1930 çулсенче ĕç вăйне йĕркелесе пухас тĕлĕшпе малтан ĕç биржисем, унтан Ĕç халăх комиссариачĕсем, каярахпа Халăх комиссарĕсен канашĕ тата ЧАССР Министрсен Канашĕ яваплă пулнă. 1992 çултан çак тивĕçсене Чăваш Республикин халăха ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх комитечĕ, 1994 çултан – ЧР Ĕç тата ĕçлев министерстви, 1998 çулхи çу уйăхĕнчен – Чăваш Республикин халăха ĕçпе тивĕçтерекен службăн патшалăх департаменчĕ, унтан управленийĕ, 2008 çулхи кăрлачран ЧР Халăха ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх службин пурнăçланă.

Рабочисене тĕпрен илсен Атăлçири, Çĕпĕрти тĕп районсенчи, ытти регионти строительство организацийĕсемпе ял хуçалăх предприятийĕсене ĕçлеме яраççĕ. 1991 çултанпа 12 пин ытла çын ĕçлев службин органĕсем урлă Чăваш Ен тулашĕнче ĕç тупнă. Службăран Раççейри 23 ытла регионти 70 яхăн организаци пулăшу ыйтнă. Хальхи вăхăтра çавăн пекех уйрăм предприяти-организаци те республика тулашĕнче ĕç сĕнет.

## Ӳнер пĕлĕвĕн учрежденийĕ

**Иртнĕ ĕмĕр пуçламăшĕнче ВХУТЕМАС ĕçленĕ. Çак учрежденисен кун-çулĕ кăсăклантарать. Унтан вĕренсе тухнисем чăваш ăстисен хушшинче пур-и?**

**А.ВАСИЛЬЕВ.**
Шăмăршă районĕ.




ВХУТЕМАС /Патшалăх аслă ӳнер-техника мастерскойĕсем/ – Мускаври /1921-1926/ тата Петроградри /1921-1922/ вĕренӳ заведенийĕсем. Вĕсене промышленноç валли пысăк квалификациллĕ художник-мастерсене, професси-техника вĕрентĕвĕ валли конструкторсемпе ертӳçĕсене хатĕрлес тĕллевпе йĕркеленĕ.

Вĕрентӳ учрежденийĕсене Патшалăх ирĕклĕ ӳнер мастерскойĕсен /Мускавра – 1918-1920 çулсенче, Петроградра 1918-1921 çулсенче пулнă/ никĕсĕ çинче çĕр-шывра ӳнер вĕрентĕвне реорганизациленĕ май 1918 çулта пĕтернĕ Ӳнер академийĕпе унăн шкулĕсен вырăнне уçнă.

Чăннипе ВХУТЕМАСра художник-станковистсене тата архитекторсене хатĕрленĕ. Вĕсем çавăн пекех професси искусствине тата наци ӳнер шкулĕсене аталанма нумай пулăшнă. Мускавринче чăваш живописчĕ И.В.Дмитриев пĕлӳ илнĕ.

1922 çулта – Ленинградри, 1926 çулта Мускаври ВХУТЕМАСран ВХУТЕИН /Патшалăх аслă ӳнер-техника институчĕ/ туса хунă. 1930 çулчен ĕçленĕ. Унта чăваш художникĕсем Ф.Л.Лаврентьев тата И.Т.Григорьев вĕреннĕ. 1930-1940 çулсенче ӳнер вĕрентĕвĕн тытăмне темиçе хутчен те улăштарнă хыççăн Ленинградринчен СССР Ӳнер академийĕн И.Е.Репин ячĕллĕ живопиç, скульптура тата архитектура институчĕ /1947/ тата СССР Ӳнер академийĕн В.И.Суриков ячĕллĕ Мускав патшалăх ӳнер институчĕ /1948/ туса хунă.

Çак институтсенче чăваш ӳнер искусствин нумай паллă ăсти тата искусствовечĕ професси пĕлĕвĕ илнĕ.

## Пĕрремĕш грамматика

**Вениамин архиепископ ертсе пынипе хатĕрленĕ чăваш чĕлхин пĕрремĕш грамматики пирки пĕлес килет.**

**В.ЕРОФЕЕВ.**
Канаш хули.



"Сочинения, принадлежащие к грамматике чувашского языка" – чăваш чĕлхин пĕрремĕш грамматики, 1769 çулхи çу уйăхĕнче Питĕрти Ăслăлăхсен академийĕн типографийĕнче 608 экземплярпа кун çути курнăскер. Ăна Хусан тата Сĕве архиепископĕ /1775 çултан митрополит/ Вениамин /В.Г.Пуцек-Григорович/ ертсе пыракан ушкăн хатĕрленĕ.

Тĕпрен илсен кăларăма латин чĕлхин грамматикин тĕслĕхĕпе йĕркеленĕ. Кĕске ум сăмах хыççăн /унăн авторĕ, ахăртнех, В.Пуцек-Григорович хăй/ сакăр пуплев пайĕ – япала ячĕ, хисеп ячĕ, местоимени, глагол, наречи, евĕрлев сăмахĕ тата татăк – пирки çырса кăтартнă. Япала ячĕсен тата глаголсен сăпатланăвĕн тĕслĕхĕсене илсе кăтартнă. Кашни пуплев пайĕ валли лексемăсен вырăсла куçарнă списокне кĕртнĕ. Пĕтĕмпе 1400 яхăн сăмах.

Ĕç никĕсĕнче – чăваш чĕлхин тури диалекчĕн Хĕрлĕ Чутай, Муркаш, Етĕрне, Сĕнтĕр тăрăхĕнчи калаçусен материалĕ, Вăрмар районĕнчи тата анатри чăвашсен хăшпĕр сăмахĕ пур. "Сочиненисен..." лексикинче архаизмсем нумай тĕл пулаççĕ: "хось" /хĕрес/, сян /кĕлетке/, сьуксӳ /çăк/, кӳпчек /минтер/, кӳнтелен /свидетель/, ширт /тупа туни/ т.ыт.те. Çавăн пекех унта грамматика терминĕсене кĕртнĕ, кириллицăпа усă курса унăн фонетикине, морфологине, лексикине палăртнă. Тĕпрен илсен "Сочиненисенче..." чăваш чĕлхин тури тата анат диалекчĕсен пайĕсене пĕрпĕринпе çыхăнтарса тĕпчеме тăрăшни сисĕнет.

Кăларăмпа кам-кам ĕçлени туллин паллă мар. Информаци паракансем, ахăртнех, Хусан тĕн семинарийĕн вĕрентекенĕсемпе вĕренекенĕсем, Е.И.Рожанский те хутшăнма пултарнă. Çак ĕç чăваш чĕлхине пĕрремĕш хут ăслăлăх тĕнчине илсе тухнă. Грамматика кун çути курни Германири,Данири, ытти çĕр-шыври ăсчахсене нумай калаçтарнă. П.Ш.Левек ăна кĕскетсе французла /Journal Asiatigue, 1825/ пичетлесе кăларнă. Чылай вăхăт "Сочиненисем..." чăваш чĕлхипе паллашмалли пĕртен пĕр тата тĕп çăл куç пулнă.

2011 çулта Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕ ăна çĕнĕрен пичетлесе кăларнă.

## Сарă ултав палли-и?

**Сарă чечек – уйрăлу палли теççĕ. Çавăнпах ăна савнине парнелеме сĕнмеççĕ. Пĕлес килет: ăçтан пуçланнă çак тĕшмĕшлĕх?**

**В.ИВАНОВ.**
Куславкка районĕ.

Ахăртнех, çак йăла авалхи арабсен халапĕнчен.

Çарне ертсе Магомет вăрçа тухса кайнă. Арăмĕ Айша упăшкине кĕтсе илме шантарса килĕнче юлнă. Анчах хĕрарăм сăмахне тытайман: урăххипе "çылăха" кĕнĕ. "Ырă сунакансем" часах çакăн çинчен Магомета пĕлтернĕ. Лешĕ, юратнă арăмне шанаканскер, сасхурана ĕненесшĕн пулман. Юлашкинчен иккĕленекен Магомета мăшăрне хĕрлĕ кĕл чечек парнелеме сĕнеççĕ. Чечексем сарăхни хĕрарăм улталанине çирĕплетет тенĕ хыççăн çар пуçĕ килĕшнĕ.

Магомет чăнах та мăшăрне хĕрлĕ кĕл чечексем парнеленĕ. Çеçкесем ытларах вăхăт упранччăр тесе хĕрарăм çĕрле вĕсене пĕвене янă. Анчах хайхискерсем ир енне сарăхса кайнă. Çавăнпах, ахăртнех, сарă кĕл чечексене юратнă çынна парнелеме тăрăшмаççĕ.

## Барбарис



**Пирĕн тăрăхра барбарис ӳсет-и?**

**А.АФАНАСЬЕВА.**
Çĕмĕрле районĕ.

Чăваш Республикинче ахаль йышши барбарис /berberis vulgaris/ ӳсет. Питĕ йăвă çулçăллă тĕмĕ. Çу-çĕртме уйăхĕсенче çеçке çурать. Чечекĕсем вĕтĕ, сарă тĕслĕ. Пыл паракан йывăç. Барбарис çырлисем тăрăхларах хĕрлĕ тĕслĕ, çиме юрăхлă, анчах питĕ йӳçĕ.

Çулçăсем çинче пучахлă ӳсен-тăрана сиенлекен кăмпа ĕрчет. Çавна май барбариса тĕш тырă ӳсекен лаптăксен çывăхĕнче лартма юрамасть.

## Хаçатсен çул çыравĕ

**Пĕр тапхăр хаçатсенчи статьясен çул çыравне туса пынă тенине илтрĕм. Республикăра тухса тăнă пур кăларăмрине те шута илнĕ-и?**

**В.ЕГОРОВ.**
Муркаш районĕ.

Хаçатсенчи статьясен çул çыравĕ – библиографи указателĕ. Текстсене чăвашла тата вырăсла пичетленĕ. ЧАССР Кĕнеке палати ăна 1954-1956 çулсенче кăларса тăнă. 1957 çулта "Чăваш Республикин пичет çул çыравĕн" пĕр пайĕ пек тухма пуçланă.

Çул çырава "Коммунизм ялавĕ", "Советская Чувашия", "Молодой коммунист" республика хаçачĕсенче пичетленнĕ материалсен библиографи статйисен списокĕ пек йĕркеленĕ. Ăна литературăна пур енлĕн шырама майсем туса парас тĕллевпе кăларнă.

